33-265



Ç. Шăнтăк

# УДАРЛĂ КУНСЕМ

ЧĂВАШИСТАТ—1933

Ç. ШĂПЂĂК

# УТАРЛĂ КУНСЕМ

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР—1933

# Респуплӗкре пӗрремӗш*)

Ирхи кăвак пӗлӗт тӳпинђе ниăçта пӗр татăк курăнмаст шур пӗлӗт. Хӗвел хăйӗн çамккине кăтартрӗ çӗр çине. Савăк, çутă куçӗсемпе пăхрӗ кăмăллăн.

— Хӗвел тухиђђен çитеймерӗмӗр. Ӗçлеме ирех тухакан вӗсем,—систертӗм йулташа.

— Ӗçленӗ çӗре кайатпăр.

Ђукунçул хӗррииђен пăрăнса кӗтӗмӗр вăрмана.

Шалкăм вăрман. „Пăт, пат. Шăпăр-шапăр. Пат!“—ват йуман йӗкелӗсене çӗр çине тăкат.

Анђах вăрăмах каймаст ку вăрман уй йенне. Шӗшкӗллӗх, хурăнлăх, çăкаллăх—тӗрлӗрен вӗт-шакăр йăвăçсем пуçланаççӗ çавăнтах.

— Ку „Волонттор“ вăрманӗ. „Волонттора“ тухатпăр. Инçе хăвармарăмăр,—ытла та васкамасăр утатпăр малалла.

— Муеек, муеек, муеек! Ăăммм!—çинђен пуçласа мăн сасăпа пӗтернӗ вăкăр сасси илтӗнђӗ пирӗн умрах.

— „Волонттор“ вăкăрӗ.

„Волонттор“ ӗне кӗтӗвӗнђен пăрăнтăмăр сылтăм йенелле.

Шăпах тухрăмăр ђăх вити патне.

— Кукуррекку-у-у!—мӗн пур вăйӗпе çухăрса йађӗ пӗр пысăк, хӗрлӗ-хăмăр автан.

Пӗр минутра сиксе тухрӗç витерен мӗн пур ђăхсем. Тапăнмаллипех тапăнђӗç пире. Утма-тăма памаççӗ. Тăрăххăн сикеççӗ. Тумтиртен сăхаççӗ.

— Куçран ан сăхђăрех,—хăраса кăна тăратпăр ђăхсем хушшинђе.

---

*) Çерӗç кăмиссариађӗ 1929 ç. „Волонттор“ комунă çинђен: респуплӗкре сăнавлă комунă шутлас, тесе йышăнна. Колхоçнӗк-утарнексен сђођӗ те çавнах каласа хăварнă.

Пĕр виç-тăват минутран вăраххăн-вăраххăн саланҫĕç пире тапăннă ҫăхсем вăрман варнелле.

Апата кĕтсе тухнă вĕсем пире хирĕç. Çу вăхăтĕнҫе апат памаççĕ иккен вĕсене.

Тавай кĕрсе пăхатпăр. Ҫăхсем вăрман варнелле саланнă хыççăн ҫăх витине кĕрсе куртăмăр.

Мăкланă, икĕ хутлă çурт. Хăмаран сарнă урай. Саксем вырăнне нарсем. Сарлака, çывăрма та çитмелле. Нарсем çинҫе, çтенасем çумĕнҫе çăмарта тумалли йăвасем, кашни ҫăх уйрăм лармалла. Уйрăм вырăн кашнишĕн. Виçĕ ҫăх кĕрсе вырнаçнă. Нимĕн те шарламаççĕ. Шăпах лараççĕ. Çăмарта тума кĕрсе вырнаçнă ĕнтĕ.

Çӳлти хутне хăпарма тăтăмăр.

— Кă-кă-кă-кă-кă!—ҫупса пыҫè епĕр хăпаракан пусма патне çутă хура-хĕрлĕ автан. Сикет пирĕн çинелле. Хăпартмаст. Такки хăпараймарăмăр çӳлти хутне.

Витерен епĕр тухнă çĕре вăрманти ҫăхсем çывхараççĕ вите патне каллах.

— Васкарах утар.

—Каллех тапăнĕç.

Васкаса пăрăнтăмăр «Волонтӗтор» йенелле.

— Ха, кăвакарҫăн пур вĕсен хушшинҫе.

Ĕлĕкхи вĕтĕ вăрлăхлă ҫăх—кăвакарҫăн пек кăна курăнат кăрккалла шултра ҫăхсем хушшинҫе.

— Пĕлтĕр виççĕр пуç патăмăр патшалăха. Кăçал çĕнĕрен кăларман. Ытти выҙăхсенҫеп сахалтарах ҫăхсен усси пирĕншĕн.

Комунă ҫăх-ҫĕп ĕрҫетес ĕçе пăрахса выҙăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçе пысăккăн тытăнат.

„Волонтӗтор“ комунăн тĕрлĕрен выҙăх-ҫĕрлĕх, кайăккĕшĕк пур.

Епĕр „Волонтӗтора“ çитсе кĕнĕ çĕре комунарсем уйри ĕçсене саланнă. Пĕр ҫĕлхесĕр, вăрăм карҫăк çеç хур кĕтĕвĕпе хăй ҫĕлхипе çуйăхса çӳрет комунă урамĕнҫе.

— Кшша, кшша! хăй пĕлекен ҫĕлхепе хӳтерет хурсене уйалла.

— Старав! Каймаççççç!—мана курса алă паҫĕ те, хуррисем çинҫен те еleклесе хăварҫĕ çавăнтах.

Анăçлăн хунаť иккен кунта хур тенĕ кайăк. Иртнĕ çул патшалăха вăгăр пилĕк пуç панă. Кăçал çул хур кĕтĕвĕнҫе татах çĕр пуçран иртет. Хурĕсем те йалти хурсем, вĕтĕ хурсем мар. Шултăра, самăр.

Хур кĕтĕвне пăхакан карҫăк ĕлĕк те хур кĕтĕвĕпе пиçнĕ карҫăк. Çавăнпа та вăл хурсене хăш вăхăтра шыва илсе каймаллине те, хăш вăхăтра çерем çине илсе тухмаллине те лайăх пĕлет. Мĕн вăхăтра мĕнле пăхмаллине, мĕн тумаллине пиçсе çитнĕ ĕнтĕ вăл.

— Пăхасса аван пăхаť. Анҫах кахалли пур пăртакçă.—хак параççĕ ун çинҫен комунарсем.

Сысна кĕтĕвне çамрăк аҫасем пăхатҫĕç вăл вăхăтра. Паллах, хаљ шкула çӳреççĕ ĕнтĕ вĕсем.

— Ывăнмастăри?—калаçма тытăнтăмăр сысна кĕтĕвĕпе çӳрекен аҫасемпе.

— Епĕр ывăнмастпăр. Сыснисем ывăнаççĕ. Вăн, тӳне-тӳне кайнă хăшпĕрисем!—выљатса калаçса илҫĕç аҫасем пирĕнпе.

Кăнтăрлахи шăрăх хĕвел ĕшентернĕ сысна кĕтĕвне

Нимĕн хусканмасăр выртаççĕ хăшпĕрисем. Ҫĕнмеççĕ. Çăвăрсем кăна парăнмаççĕ шăрăхран. Тăк-так! тĕккелесе илеççĕ çавăнтах пĕрпĕрне асавпа. Кăлтăрмаҫла кусса çавăрăнаççе амăшĕсем тавралла. Ҫретĕн, вăраххăн пырса тăраççĕ амăшĕсен хӳггине.

— Иккĕнех пăхатри?

— Иккĕнех. Каймаççĕ вĕсем ниçта та. Ахаљ кăна çӳретпĕр вĕсем хыçĕнҫен,—хавасланса калаçаççĕ аҫасем.

— Сыснисем ҫылайи вара кунта сирĕн?

— Ваттисем çирĕм сакăр пуç. Çăвăрĕсем сакăрвун пилĕк. Ваттисенҫен пĕлтĕр патшалăха вунпĕр пуç панă. Пама ыйтманҫҫĕ пирĕнтен. Хамăр ирĕкпе пагăмăр. „Парас“ терĕмĕр,—çитĕннĕ çын пек калаçаť сыснасем çинҫен аркасăр, çĕгĕх сăхманлă аҫа.

— Хăвала! Картана кайса хупатпăр!—çавăнтах ĕшкĕртет хăйĕн йулташне.

Сыснасем йерипен, кахаллăн угаççĕ карта йеннелле, кăнтăрлахи кану пулат унга вĕсен.

Уçă пĕлĕт айне тавралла хӳме тыгса çавăраннă çĕре кĕрсе вырнаçаççĕ сыснасем.

— Шăрăх ĕнтĕ паллах. Мĕн тăвас тетĕн? Çулла ваҌҌи уйрăм витесем тăваймарăмăр. Хĕлле ваҌҌи те çителĕклех марха сыснасен. Кăçал майлаштарас, тетпĕр ĕнтĕ,—сыснасене шăрăххине кура калаçаççĕ апага таврăннă комунарсем.

— Мек!

— М-е-ек.

— Ме-е-ек!

Вăрман йенҌен сурăхсен сасси илтĕнет. Кĕпĕртеттерсе те çитрĕ сурăх кĕтĕвĕ кăнтăр кануне. Тĕрлĕрен сурт: вĕтĕ вăрлăх, вăрăм хӳреллĕ шултрисем, вăтаммисем. Йыш тĕлĕшĕнҌен те пĕҌĕкех мар ку кĕтӳ: 181 пуç шутланат.

— Сурăхсем те, сыснасем те хутăшла сурт-çке сирĕн. Вĕттисене улăштарса, суртлатса пымастăри мĕн есĕр?

— Çапла пулса пырат вăл пирĕн. Сысна аçисем те, такасем те мăн вăрлăхлисем туйаннă. Ҍăваш вăрлăхĕсене çав мăн вăрлăхлисемпе Ҍуптаратпăр. Çапла урăхлатса пыратпăр. Аçисене—вĕттисене Ҍуптарма йамастпăр. Кастарса йаратпăр вĕсене. Хунаттараймаççĕ вĕсем. Çав майпа вара суртлă вăрлăх кăна хунаса пымалла пулат. Вăн, çав, Ҍăваш сурăхĕнҌен мăн вăрлăх такапа пулнă. Ҍисти ашшĕ пекех пулнă. Мăйракисем те ашшĕнни пекехçкехе хăт,—тĕлĕннĕ пек пулса кăтартрĕ пĕр мăн мăйракаллă шурă, пысăк така çине кĕтӳçĕ.

Ĕне кĕтĕвĕ те персе çитрĕ кăнтăрлахи канăва. Паçăрхи вăкăр сасси илтĕнет мĕн пур кĕтĕвĕпе. Çавăн сасси кăна. Ĕнисем шăпăртах.

Çĕр Ҍаваласа мĕкĕрме тытăнҌĕ вăкăр. Пире паллаpĕ пулас—йут çынсене. Вăхăтра пăрăнтăмăр. Вăкăр та кеҌĕ картана. Картара та Ҍылайҍҍен илтĕнҌĕ уп сасси.

— Пăвансем çыртнă пули-ха ăна. Темĕншĕн çилленĕ вăл?—çӳхе тутине кулнă пек туса вăкăр çинҌен калаçса илҌĕ комунăн претçетаттĕлĕ.

Самăр та çав вара ĕнесем. Ҫăваш хушщинҫе курма хĕн вĕсене.

— Пĕлтĕр хыснана пилĕк ĕне патăмăр. Тĕлĕнсе кайрĕç вĕт Вăрнарта пирĕн ĕнесенҫен. Пĕтĕм ĕнесен хушшинҫе çук пирĕн ĕнесем пекки,—хăйсен ĕнисене хăйсем мухтаççĕ комунарсем.

— Миçе ĕне кунта?

— Çитмĕл пĕрре. Пăрушсем çирĕм пĕрре. Айтăр пĕҫĕк пăрушсем патне кайса куратпăр.

Пĕҫĕк пăрусен виттисене кайнă май ĕнесен витисене кĕтĕмĕр. Кашни ĕне ваҫҫи уйрăм вырăн. Çавăнтах ĕнисен йаҫĕсене çыра-çыра çапнă: „Дочка“, „Манька“, „Субботка“. Тата та тĕрлĕрен йатсем. Йатсем çумĕнҫе нумĕрсем.

— Нихăçан та вырăншăн вăрçмаççĕ. Кашни харпăр хăй вырăнне пырса тăраççĕ,—тăнлантарса парат пĕр комунар.

— Вăрçсан комунă пулати?—йăлкăшса илет тепри.

Пĕҫĕк пăрусем патне çитрĕмĕр. Мăклă вите. Темиçе пўлĕм. Пĕрер, икшер пăру кашни пўлĕмĕнҫе.

— Пыйтăсем йернĕ-ха çаксене,—икĕ пăру пĕрле тăракан пўлĕмрен урайĕнҫи çўп-çапсене тасатаççĕ икĕ хĕр.

Пўлĕмрен пўлĕмсене çўретпĕр ҫеретпе. Пĕр пўлĕмре питĕ çамрăкскер тăрат.

— Пилĕк кун анҫах хаҫ кăна. Аҫа,—каласа параççĕ пăру пăхакан хĕрсем.

— Ак кунта виçĕ ернерисем,—илсе кĕртсе кăтартаççĕ йунашар пўлĕмне.

Пилĕк кунхи. ернехи. Икĕ ернехи. Уйăхри. Йăлтах вăхăтăн уйăрса уйрăмăн-уйрăмăн хупнă пăрусене. „Кабинет завхоза“ тесе, хура краскăпа, мăн саспаллисемпе çырнă пĕр алăк патне çитсе тăтăмăр.

— Неушлĕ савхос çакăнта пурăнат вара сирĕн?

— Уçса пăхăр!

— Кĕме йурати?—шаккарăм пўрнепе алăкне. Сасă памарĕ мана хирĕç никам та. Хĕр хыттăнрахах кулса йаҫĕ. Иккĕленсе уçрăм алăка. Çамрăкрап та çамрăк пăру тăрат ман умра.

— Ĕнер анҫах пăрулана-ха.

Вĕренсех ҫитеймен хирĕҫ сас пама,—хура тутăр вĕ-ҫĕпе шăлса илҫĕ тутине хĕр аҫа.

Пăрусем патĕнҫен кайалла епĕр таварăннă ҫĕре шă-пах кăнтăрлахи апата пуҫтарăннă комунарсем.

Столовăй. Ҫутă. Аслă. Ҫĕнĕ пӳрт. Пĕлтĕр кăна туса пĕтернĕ ку ҫурта. Ҫавăнтах ратио.

Пĕр ҫменăпах ҫиме шăнăҫаймаҫҫĕ комунарсем. Ҫа-вăнпа та икĕ ҫменăпа ҫиеҫҫĕ. Ҫашăк-кашăк ҫителĕк-лĕ Лайăх. Таса. Ҫăкăр, йашка ҫителĕклĕ параҫҫĕ.

Пĕр сехетрен пуҫласа 3 сехетҫен пырат апат вăхăҫĕ. Хĕвел тухиҫҫен ĕҫлеме тухаҫҫĕ. Хĕвел ансан ĕҫрен кĕреҫҫĕ. Ывăнмаллипех ывăнаҫҫĕ. Ҫавăнпа кăнтăр апа-ҫĕ вăхăтĕнҫе канса илесшĕн хăшпĕр комунарсем. Апат ҫинипе пĕрлех уттарҫĕҫ килĕсене.

Прикатирсем йулҫĕҫ. Пĕҫĕксĕ. Тăлпан. Ҫивĕҫ, хура куҫлă хура хĕр те прикатирсемпе пĕрле. Ку хĕре епĕ Ҫăваш респуплĕкĕнҫи советсен иртнĕ сиесĕнҫе кур-нăҫҫĕ. Телекат пулса пынăҫҫĕ вăл Шупашкара, сиеса. Унăн йаҫĕпе хушаматне те лайăх пĕлетĕп епĕ.

— Ну, санăн хутла пĕлменлĕхпе кĕрешес ĕҫ мĕнле пырат-ха комунăра, Васса Романăвă?

— Сиеса сăмах панине пурнăҫлана. Хутла пĕлменни комунĕпе те пĕр ҫын та йулман. Майăн пĕрремĕшне ҫыракан-вулакан тунă вĕсене.

— Пурне те ҫиҫшер ҫул вĕрентетпĕр. Саоҫнăй курс-сем пур. Епĕр ĕҫре вĕренетпĕр. Хамăра кирлĕ катăрсе-не хатĕрлетпĕр. Вăн, пирĕн трактăрис Виктăр хăйех икĕ трактăрис хатĕрлесе ҫитерҫĕ. Вăл катăр мари тата? Хвершăла вĕренме хамăртан йанă. Выҫăх хвершăлне хамăртан вĕрентсе кăларнă.

Комунăра партти йаҫейкки, комсомол йаҫейкки пур. Партти йаҫейккинҫе 13 ҫлен. Вĕсенҫен ҫиҫĕшĕ кăн-титатсем. Парттине кĕме сайавленисем нарса хунисем тата та пур.

Комсомол йаҫейккинҫе 20 ҫлен. Ку вăхăтра пурте кикийенă курсĕнҫе вĕренеҫҫĕ.

Партти йађейкки те, комсомол йађейкки те хёлле вёренмелли шкулсене уçса, плансене хатёрлесе хунă. Проппакантис пынă. Ахаљ шкул ваљљи те уђитлё вăхăтра çитсе, ёçне те вăхăтра тытăннă. Кăçалхи çул комунăра партти вёренёвё те, шкулта вёренесси те çителёклё лайăх пырасса шанма пулăт.

Комунарсем—парттийгсăсем те, парттире тăманнисем те тёрлёрен хаçат-шурналсем çырăнса илеççё.

— Çырăнса илетпёр анђахи вара епёр? Хамăр та çырса тăратпăр. Сысна пуçлă империалиссем: „ђăваш халăхё Ленин çырнине ăнланаймаст" тесе елеклеме тăнă пирён çинђен. Мёнле ăнланмăпăр? Ăнланма мар, пурнăçласа пыратпăр. Çаплах çырса ответлерёмёр вара „Канаш" урлă хăйсене те, хăйсем хаçат çине çырса тăнине мăн кăмăллăн та, хаваслăн каласа пађё Романăвă йулташ.

— Пирён кунта пур тёрлё орканисатсисен йађейккисем те пур. Вёсенђе епёр пуринђе те хастарлăн ёçлетпёр. Епё прикатир. Манăн прикатă пёрре кăна премиилмен...

Вассă Романăвă парттире 1928-мёш çултанпа тăрат. Килёнђе вёсем ђухăн пурăннă. Тăлăхăн ўснё. Сахалах курман авăк пурнăçа. Сиввине те тўснё. Выççине те курнă. Çавăнпа та вăл комунăра мён пур вăйне хурса, савăнса ёçлет.

Анђах пёр Вассă кăна мар ку комунăра пётём вăйне хурса, ђёререн савăнса ёçлекен. Унăн прикати те кăна мар. Пётём комунарсем çавăн пек ёçлеççё,—пётём прикатăсем!

Акă çуракине вёсем план тăрăх 155 кунта туса пётермелле пулнă. 96 кунга туса пётернё. Çав вăхăтрах акакан çёр лаптăкне 150 прођђăна çитернё.

Таврари йалсем, колхоссем çаран çулма тухађђен „Волонттор" комунăри комунарсем çаран çулса пётере пуçланă. Икё çёр алă лав патшалăха пама ёлкёрнё. Ытти колхоссем ку вăхăтра çарансем кăна виççе çўренё.

Комунăн çарансем питё те путăк-шăтăк, çатра-çаплă, кансёр вырăнсенђе. Çапла пулин те кунне трактăр

ултă кектар çулнă. Çавапа çулакансем тăваттăн пĕр кектар çулса çитерме ĕлкĕрнĕ.

„Волонттор“ комунăра йалан ĕçлеме пултаракансем 34 сын шутланаççĕ. Вĕсем прикатăсем çине уйăрăлса ĕçлесе пыраççĕ. Ирхине, сывлăмла, çулмалла—пур прикати те çулма тухат. Каçпала пуçтармалла—пур прикати те пуçтарма тухат. Вĕсем пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе кĕтсе выртмаççĕ. Ĕç вăхăтне пĕлсе ĕçлеççĕ. Ĕçе гĕрĕс шута илсе пыраççĕ. Кашни комунарăн ĕçе çырса пымалли „лицевой счет“ пур. Прикатирсем хăйсен прикатинҫи сынсен ĕçĕсене шута илсе пыраççĕ. Пухкалттери вĕсене пухса çырса пырат.

— Точный учет!—мухтаççĕ хăйсем, комунарсем.

Çапла ĕçлесе пынипе комунарсем хăйсенне çаран 78 кектар çулса пуçтарнă. 35 кектар тырă вырса, çапса пуçтарса кĕртнĕ.

Çав вăхăтрах Пăртасри колхоса 12 кектар вырсапанă. 24 кектар çапса пуçтарса панă. (Пăртас колхосĕн мĕн пурĕ те 24 кектар кăна!)

„Путоннăй“ колхоса 11 кектар вырса нынă.

Мăнйал Хапăсри колхоса 32 тоннă çапса панă.

„Волонттор“ комунарĕсем кашни ĕçлекен пуçнетăватă кектаршар уйран пуçтарса кĕртнĕ. Çав вăхăтрах тата вĕçем çилос валҫи мĕн ҫухлĕ ĕçленĕ. Калама хăрушă! Етем çĕнтереймен йапаласене çĕнтерме тытăннăн туйанат. Вăл ҫăнах та çапла.

Мĕнле совхосра, мĕнле комунăра, мĕнле колхосра, ку вăхăтра мĕнле тĕслĕ хресҫен хуçалăхĕнҫе кашни ĕçлеме пултаракан çын пуçне уй ĕçне çавăн ҫухлĕ ĕçлеме ĕлкĕрни пур?!

Çывăхри колхоссене, комунăсене ĕçлесе панисене, хăйсен уй ĕçĕсемпе çилосшăн ĕçленисене илсе шутласан „Волонттор“ комунăри комунарсем çине вунă кектаршар ытла тивет. Пахҫа вырăнсем сахали тата?! Кашни комунара хăйне тивекен вырăна тăратса тухсан шыраса тупма хĕн вĕсене. Шăмшак çӳçенет!

Çав вăхăтрах Пăртас колхосĕ хăйĕн мĕн пур пек 24 кектар çинҫи тыррине пуçтарса кĕреймен! „Волонттор“

комунарĕсем пуçтарса, çапса панă. Акă ăçта палăрат вăл ĕçе тĕрĕс йĕркелесе, çирĕп йертсе пыни!

— Ман прикатăра пурте хĕрарăмсем. Ман прикатăна йăвăртарах тивет хăшпĕр ђух. Ĕçлемеллипе ĕçлесен— çитерсе, иртерсех пыратпăр. Ниђђово, вăй пур ђух ĕçлетпĕр,— хĕрарăм прикати ĕçĕсем çинђен мухтанса каласа пађĕ Романăвă прикатирсен канашлăвне пĕтерсе тухнă ђух.

Кăнтăрлахи канăва иртернĕ хыççăн комунарсем вырса пăрахнă йулашки вире пуçтарма тухрĕç. Тăватă лавпа кĕлтенĕн-кĕлтенĕн пуçтарса, çавăнтах лавсем çине тийесе пыратпăр. Тийенĕ лавсем молоттилккă патне кайаççĕ.

— Нук-кă, хăш лавĕ маларах?!

— Ман прикатă!

Ăмăртса ĕçлеççĕ комунарсем.

— Машшин ђарăнмалла пулмасти унга?!—çавăнтах тĕрĕслесе илеççĕ лавсенђен.

— Халђђен ђарăннă-и пирĕн!—мăн кăмăллăн тавăраççĕ лавăçсем.

— Тĕлĕнмелле шутласа тăваççĕ-çке ĕç планне те. Опесаттĕлнă вуниккĕн ĕçлесе пырсан, машшин ђарăнмасăр ĕçлесе ларат. Ытла та çирĕп шутлаççĕ çав мур ађисем,—комунарсен ĕç планĕнђен тĕлĕнет райколхоссойус претçетаттĕлĕ Капиттонăв й-ш.

(Капиттонăв й-ш кашни тухав кунĕнђе пырса ĕçлет комунăна. Вăл ђлента ку комунăра. Комунăна пуçласа йаракансенђен пĕри).

Икĕ сехет хушшинђе вир кĕлтисене пуçтарса пĕтертĕмĕр. Йулашки лав тийесе йатăмăр.

Малтанхи лавсем пирĕн паталла каллех пыраççĕ.

— Айтăр виккă тийеме!

Лавăçсем айалтан парса тăраççĕ. Вĕсемпе пĕрле тепрер çын айалтан пĕрле параççĕ. Тăватă лав çинђе тăваттăн майласа тăратпăр. Лавсем кайсан тĕпне пуçтарса йатасси пирĕн çинђе.

— Машшин ђарăнмаст-и?!

— Ĕлĕк ђарăнса-и?

Машшин пĕр ђарăнмасăр ĕçлет. Епĕр ĕлкĕретпĕр.
Вунсакăр лав тийесе турттарса, çапса пĕтертĕмĕр.
Тăватă сехет ĕçлеме шутласа хунăђђĕ. Виçĕ сехет те хĕрĕх икĕ минутра пĕтертĕмĕр. Йулашки лавсемпе çитрĕмĕр машшин патне епĕр те. Лавсем çинђен тӳрех машшина параççĕ. Нимĕн те тăккаламаççĕ.
Ĕç вăйĕ те сахалтарах кирлĕ капла ĕçлесен.
— Çакăнта машшин çĕмĕрĕлсе кайсан, ђиперех ĕçе ђармалла пулат ĕнтĕ,—калаçса илтĕм комунарсемпе виккă лав тĕпне кăна йулсан.
— Виççĕмĕш çул ĕçлетĕп трактăр çинђе. Пĕрре те çĕмĕрсе курман-ха. Çĕмĕрсе курнине астумастăп ытти машшинсене те,—ђăррр, ђарса лартрĕ машшина ĕçе пĕтерсе трактăрис Виктăр.
Виçĕ çул ĕçлесе пĕрре çĕмĕрмен!
— Ылтăн метал парас пулат сана.
Анђах Виктăрăн сывлăхĕ ђаплах мар вара.
— Ан кулђан, Виктăр. Çак уйăхрах курорта йаратпăр,—лăплантарат Капиттонăв йулташ.
Виктăр—трактăрис, трактăр çинђе—çӳрет; Виктăр—машшинис, пур машшинсене пĕлет, йусат вĕсене; Виктăр—тимĕрçĕ, мĕн кирлĕ çавна тăват тимĕрçĕ лаççинђе; Виктăр—мелник, арман авăртат трактăрпа, арманне те хăйех туса лартнă тата çитменнине. Виктăр—спетс!
— Тырпул питĕ те йапăх пулат пирĕн. Хăйне хăй те лайăххăн витеймест. Кăçал вăн пушшех йапăхрах пулђĕ. Вăрман хĕрри. Йур кайса пĕтмен. „План тăрăх сирĕн пайан акса пĕтермелле. Есĕр пур—акана та тухман!" Килсе кĕмсĕртеттерђĕç çемотелран. Камăн айăпа кĕрес килтĕр? Лашасем кĕрсе ӳкеççĕ. Трактăр кĕрсе ларат. Çаплах акса хăвартăмăр вара, плана пăхăнса. Вăн, нимĕн те пулмарĕ çакăнта,—вăрман хĕрринђи анасем çине кăтартса пырат мана пĕр комунар.
— Çавăнпа та ыђăх-ђĕрлĕх ĕрђетмелли комунă тăватпăр та.
Каç пулнă çĕре комунăна çитсе кĕтĕмĕр.
Арçынсем утрĕç каçхи апата.
Хĕрарăмсем васкарĕç ĕнесем сума.

— Çĕр литтăр пĕр ĕç кунĕ пулат. Тăвата кунта тултараççĕ хăйсен нормине,—ĕне сăвакансем çинђен йумахласа пађĕ уђђот тăвакан.

Пăхăр. Асăрхăр: ĕне тăрăх мар, литтăр тăрăх виçеç-çĕ ĕç кунне. Çапла тумалла çав ăна!

— Комунăна ĕçлесе пулăшнăшăн çу хурса парас пуђ сана ђей патне,—шур тарелккă çине сап-сар, хатрăкра тунă çу хурса пађĕç ман ума ђей хушшинђе. „Сель-хоз артель „Волонтер“ тесе çырнă çăвĕ çине.

— Рехмет.

— Райкопсойуса паратпăр, токăвăр тăрăх,—кăтартрĕ çу çине савхос.

— Пыл та хăвăрăннахи?

— Хамăрăннах. Çĕр çемйене йахăн. Пыл парса тат-рăмăр патшалăха. Ку—хамăр вађђи йулни. Пыл анђах мар ĕнтĕ. Пĕтĕм сатанисене татрăмăр. 300 прођђăн тултарса. Пĕлтĕр 600 прођђăн тултарнăђђĕ—ђей хуш-шинђе йумахласа ларђĕ савхос.

— Смотрей, тăм ӳкет кĕçĕр каç. Сивĕтрĕ,—алăка вăраххăн хупса кĕђĕ пĕр старик.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ?—сăмахласа илђĕç пĕр-иккĕн виççĕн.

— А, пионерсен пахђи?!

— Пуçтарас кĕçĕрех!

Каçхи апат хыççăн ĕçе тепĕр хут тытăнђĕç комунарсем.

„Пионер пахђи“. Ку пахђара пионерсем ĕçленĕ. Унта тĕрлĕрен пахђа çимĕç. Кĕçĕр каç пăмитор пуçтараççĕ çĕр хутах. Тăмран хăраççĕ. Тăм ӳксен мĕн пур пăми-тор пĕтет вăт!

— Тĕлĕнмелле. Нимĕн те курăнмаст уринђе. Ђĕрни-сене те çурăм ĕнтĕ лайăхах. Çук нимĕн те. Çавах ук-саклат ку ĕне,—выђăх хвершăлĕн çак сăмахĕсемпе çывăрса кайрăм епĕ тулти çелнĕкре.

— Тăрррр, Богатырь—çав хвершшăл сăмăхĕсемпех вăрантăм ирхине.

— Хăмăтне хăйăнне тăхăнтармасăр пăснă ĕнсине,—лаша ĕнси çинђи çилхине пĕђĕкçĕ хађăпа, вăрахăн касса калаçса илђĕ манпала, епĕ тухсан вăлах.

Ирхи сăн çапнă кун çутине. Çутăлсах çитеймен. Çанталăк сивĕ. Тăм ӳкнĕ каçхине.

— Çине тăрса пуçтарман пулсан—кайаҕҕĕç пăмиторсем каçхине,—вăрахăн лаша кӳлет тулçутипе пĕрле пĕр старик.

— Ăçта капла ирех?

— Çилос ваљљи турттармалла. Вăн, ларат йăтăнса. Виççĕр тоннă кĕрет унта, аҕам,—çилос пашни çинелле кăтартрĕ старик.

Енер те пысăккăн, катаран курăнса ларакан пашњă тата та пысăккăн курăнҕĕ ман куçа.

— Смотриттĕ. Çине тăрса тултарăр. Мĕн пур ĕçĕр те çав анҕах ĕнтĕ хаљ сирĕн. Не подкачайте, ребята! Килес çула виççĕр пуçа çитермелле ĕнесене. Ан манăр! хытăрласа хăварҕĕ Капиттонăв йулташ комунарсене.

— Пĕлетпĕр!

Тăм ӳкнĕ çĕрем урлă каçса кĕтĕмĕр вăрмана.

— Пăт, пат!—йăвăрлăхне йăтаймасăр ӳкеççĕ йĕкелсем.

— Йĕкел пуçтарма те орканисатсиленнĕҕҕĕ çавсем?— тап тăҕĕ Капиттонăв.

— Пĕлеççĕ пулĕ-çке!—лăплантартăм васкатса.

„Животноводческая коммуна“ пулат, вĕт... Ку таранҕҕен кашни çул патшалăха вунпĕршер пин таса тупăш парса пынă. Малашне тата нумайтарах паракан пулас тетпĕр-çке.

Çилос пашни патне лартнă трактăр сасси ҕылайҕҕен илтĕнҕĕ вăрмана. Вăрахăн, вăрахăн лăпланҕĕ. Çухалҕĕ.

# Илйин йулташпа Хĕритун çинҕен.

„Ленин“ колхос çуракине районра ытти пур колхоссенҕен малтан тухса вуникĕ кун ĕçлемелли плана сакăр кун ĕçлесе тултарҕĕ. „Çавал“ колхос тыр вырма тухнă кун „Ленин“ колхос шăпах кăнтăрла тĕлĕнҕе ыраш вырса пĕтерсе кĕҕĕ.

— Хамăр колхос çитĕнĕвĕсем çинҕен кĕнеке çыртарасшăн епĕр. Пирĕн çитĕнӳсем вĕсем мухтану çитĕнĕ-

вĕсем мар. Пирĕн çитĕнӳсем вĕсем пољшевикла ĕçлесе туса пынă çитĕнӳсем. Епĕр пољшевикла çапăçса ĕçлесе пыратпăр. Çапла ĕçлесе пынипех епĕр тырпул хатĕрлев планне октапĕрĕн 1-мĕшне 112 прођђăн тултарнă. Октапĕрĕн 15-мĕшне пур хатĕрлевсене те пĕтĕмĕшпех тултарса татнă. Пирĕн колхосран ђылай колхоссен пример илмелле,—сылтăм аллипе ђĕневлĕ сулса трипун çинђен анђĕ респуплĕкри уй-хир утарнĕксен слђотне килнĕ „Ленин“ колхос претçетаттĕлĕ Илйин йулташ.

Илйин йулташ умне тухса каламасăр пĕр канашлу та иртмест. Хăйĕн ватам виçеллĕ çирĕп кĕлеткине трипун умне кăларса тăратсан, çаврака çивĕђ хура куçĕсемпе парăнтаруллăн пăхса илет пĕрре тавралла ларакансем çинелле.

— Вара калаçса татăлăпăр,—пăшăлтатса ђарăнаççĕ пĕрпĕринпе темĕн çинђен калаçса ларакан йулташсем.

— Йулташсем!—хăйĕн çивĕђ куçĕсене ларакансем çине йарса, кашнине тĕрĕслесе илет Илйин йулташ.

— Пирĕн çитĕнӳсем!..—вăрахăн вăтам кăмăллă сасăпа пуçласа йарат хăйĕн сăмахне. Пĕтĕм итлесе ларакансене парăнтарса илет хăй çине. Шавлани-туни илтеймĕн вăл тухсан. Пурне те парăнтарма, пурне те пултарма пултарнăран ăна „Асамăç“ тесе йат панă.

— Çапла снађђăт, Çтеппан Иванђ,—терĕ мана ђĕнсе илсе Илйин йулташ. Ђăрр, пăхрĕ çавра куçĕсемпе ман çине урараи пуçласа ман куççем тĕлне çитиђђен. Хурлăхлăн, хĕрхенӳллĕ, ĕçлĕ виçепе тухрĕç Илйин йулташăн сăмахĕсем. „Илтрĕм. Ăнлантăм. Тархасшăн урăх ан кала. Илйа Илйиђ“,—терĕм епĕ ăна хирĕç. Вăл каланă тăвалă сăмах мухмăр пуçа сыватрĕ. Хура та, çутă, йăлтăркка куçĕсем хĕрĕтрĕç манăн сăн-пите ĕнерхинђен ытларах. Епĕ хам прикатир. Пĕрремĕш прикатă пуçлăхĕ. Тем ăс тытнă вара епĕ ун ђух. Хаљ те ответ парайманстăп ун ђухнехи çинђен хама хам. Хуњăм пĕђĕк сăра тунă. „Килтĕрха кĕрӳ“ тесе арăмăн йăмăкне ђĕнме йанă. „Мансăрах та ĕçлĕсха каçђен“—тесе уттара патăм каçпала тыр вырнă çĕртен хуњăм патне, уй урлах, тыр

вырма тухсан тунтикун. Тепĕр кунне ирхине ирех ҫĕнтерҫĕ мана хăй патне Илйа Илйиҫ. „Ҫапла, снаҫҫăт Ҫтеппан Иванъ,—терĕ... Темшĕн тухтăр пулман вăл Илйа Илйиҫ? Пĕр емелсĕр. сăмахĕпе, куҫĕпе ҫĕртпĕ пулĕҫҫĕ вăл—сывмар ҫынсене,—Илйин йулташ ҫинҫен апатра каласа паҫĕ респуплĕкри уйхир утарнĕкĕсен сҫотне килнĕ прикатир Иванов йулташ.

* * *

Тĕттĕм те, пылҫăк кĕрхи каҫ. Умра нимĕн курăнмаст. Йалта шăпах. Ăшă айхăпа ҫывăрат кĕрхи йал.Унта кунта кăна курăнкалаҫҫĕ лампă ҫутисем, Анатри Ҫерки йатти вĕрни илтĕнет ту касса. Урăх сасҫĕв тупаймăн йалта.

Кантăк умĕнҫе, урамра, мăкăртатни илтĕнҫĕ. Тепри ҫавăнтах вăрттăн ӳсĕрҫĕ.

— Мĕнле сасăсем?—шикленнĕ пек пулса ҫарăнҫĕ хаҫат вуласа ларакан претҫетаттĕл кантăк умĕнҫен тепĕр йенелле.

Лăкăрт, лăкăрт!—туртаҫҫĕ хапха калинккине.

— Алăксене лайăх питĕрнĕ-ши?—кăнҫеле арласа ларакан арăмĕнҫен систермелле ыйтрĕ Илйин йулташ шикленнĕ пек пулса.

— Кăпăр-кăпăр-кăпăр-кăпăр! — пӳрнесемпе парапанларĕ пĕри урам йенҫи кантăкран ҫав хушăрах.

— Тухатпăр!—урай варринҫи пĕҫĕк пукан ҫинҫе ларакан арăмĕ кĕнҫелине пăрахса тăҫĕ ура ҫине.

— Ыйтмасăр мĕнле тухатăн ара? Кам пĕлет ҫурҫĕр варĕнҫе!..—хыттăнах ҫарҫĕ арăмне упăшки.

— Ваҫкка ку—тури арманти мелник!—иккĕленсе ҫарăнҫĕ арăмĕ.

— Армана ҫаратса кайман пулĕҫке!—сасартăк пăрахрĕ аллинҫен хаҫатне сĕтел ҫине Илйин йулташ.

— Тухса уҫ-ха хăвах!—ҫавăнтах хушрĕ арăмне.

— Кăна пĕлнĕ пулсан тухас та марҫҫĕ леш йалтан. Ашпа ҫӳресе хăшкăлтăмăр. Латнă арман пӳртĕнҫи ҫутă курăнҫĕ. Сывă-и, Илйин йулташ?—ал пырса тытрĕ Илйин йулташа ҫĕнĕрен килнĕ сăран тумтирлĕ, ҫӳллĕ, самăр ҫын.

— Такам кутран çаптарат ĕнтĕ тата сана?—хăйĕн çӳхе тутисене йăлкăшнă пек турĕ Илйин йулташ вăрманпромхосри хăй паллакан Çверĕв йулташа ал тытса.

— Çаптараççĕ çав. Кутран мар, пуçран та çаптараççĕ. Тавай-ха колхос пухăвĕ туса иртерер кĕçĕр, Илйин йулташ.

— Колхос пухăвĕ?—тĕлĕнсе пăхса илђĕ Илйин Çверĕв çине.

— Та, колхос пухăвĕ. Сирĕнпе токăвăр тума килтĕм епĕ вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе. Токлат туса парас тетĕп кĕçĕр. Прорыв вĕт, ађа, йулташла калаçса илђĕ Çверĕв йулташ.

— Прорыв мар, хăт темскер пултăр. Кĕçĕр каç колхос пухма пулмаст. Çурçĕр çитнĕ, вĕт.

— Áспа калаçатни есĕ, Илйин йулташ?—тесе иккĕленсе ыйтрĕ Çверĕв.

— А, есĕ ăспа калаçатни тата?—шăтарас пек пăхрĕ Çверĕв çине.

— Прорыв, тетĕп ĕçре!

— Прорыв мар, тем пултăр хăт. А кĕçĕр каç пуху пухмастăп. Çурçĕр иртрĕ ĕнтĕ.

— Прорыва пĕтерме вăхăт пĕлмеççĕ.

— Никама та тăратаймастăн хађ çывăрнă çĕртен. Çынсене те йăхă памастăн. Ху та канлĕ выртса çывăраймастăн. Вырт та çывăр. Ирхи ĕç каçхинђен иртерет, теççĕ. Вырăн пур,—хушăвлă, çемçе кăмăллă сасăпа вырăн çинелле кăкартрĕ Илйин Çверĕв йулташа.

— Ђăнах та пуђ,—вăрахăн килĕшрĕ лешĕ те.

Пайан миçе йалта пулнине, миçе токăвăр тунине, Лешкассем вăрман турттарма кайасшăн маррине—йалтах каласа пађĕ Çверĕв йулташ, пĕр 15—20 минут хушшинђе.

— Ĕçкĕ ăшне путнă вăл Хăритун. Пуринпе те ĕçкĕпе çыхăннă. Никам ăна итлемест,—хĕрхенсе каласа хуђĕ Илйин Лешкасри колхос претçетаттĕлĕ çинђен.

— Пайан та ӳсĕр!

— Ӳсĕр пуçлăха йепле итлеме пултартăр ĕнтĕ ĕçхалăхĕ.

Каласса выртнӑ хушӑрах йерипенех ӑшӑ ӑйхӑ пусмӑрласа хӑйӗн парӑнтаракан аллипе лӑпкаса сывратрӗ икӗ йулташа.

— Танн-н-н!—пӗр сехет ҫитнине паллӑ паҙӗ стена ҫумӗнҙе ҫакӑнса тӑракан ватӑ сехет. Анҙах нихӑшӗ те иглемерӗҫ сехет сассине кӑнтӑрлахи ӗҫпе ывӑннӑ йулташсем.

— Для ликидации прорыва!—хулӑм сасӑпа тӗлӗкре тӗлленсе аташса ҫамки ҫинҙе выртакан сулахай аллине ҫумнелле илсе, кӑҙӑр-кӑҙӑр тутарҙӗ хӑйӗн шурӑ ҫивӗҙ шӑлӗсене Ҫверӗв йулташ.

Пӗр вӑранми сывӑрат кӗрхи йал. Йалпала пӗрлех сывӑрат „асамӑҫ“ пӳрҙӗ те. Нимӗн сас-хура илтӗнмест пӳрт-ҫуртра. Пӗр хура кушак кӑна Ҫверӗв патне йерипен утса пырса ҙылайҙҙен пӑхса тӑҙӗ вырӑнтан сикмесӗр. „Йутӑ. Пырат мана. Ӑшши пултӑр“ терӗ пулас — вӑрахӑн, йерипен кӗрсе выртрӗ Ҫверӗв ҫумне йунашар. Мӑрлаттарса сывӑрса кайрӗ вӑл та ӑшӑ ӑйхӑпа. Шӑп.

* * *

„Ленин“ колхос кӑҫалхи вӑрман хатӗрлес плана тултарнӑ. Октапӗрӗн 17-мӗшӗнҙе вӑрманпромхоспа 100 купла метр хатӗрлеме токӑвӑр тунӑ. Токӑвӑра виҫӗ кун хушшинҙе пурнӑҫланӑ. Колхос претҫетаттӗлне Илйин йулташа вӑрманпромхос костум парса парнеленӗ. Прикатирсене Ивановпа Ҫеменӑв йулташсене атӑсем парса парнеленӗ. Колхоса хӑйне витесем тума йӑвӑҫ парса парнеленӗ. „Ленин“ колхос вӑрман турттарса кӑларма 100 купла метршӑн вӑрманпромхоспа ҫӗнӗрен токӑвӑр тунӑ. Лешкасри „Сталин“ „колхос ӑмӑртӑва ҙӗннӗ“—тенӗ йапала ҫапӑнса тухнӑ октапӗрӗн 27-мӗшӗнҙе тухнӑ районри хаҫатра.

— Асамӑҫ!—мӗн пур ҫилӗпе ҫурса тӑкрӗ районри хаҫатра сарӑмсӑр мухмӑр куҫӗсемпе ҫаксене вуласа илсен Хӗритун хӑй аллинҙи хаҫатра.

— Пултарӗ вӑл „асамӑҫ“—ҙылай колхос правлени претҫетаттӗлӗсем ӑмсануллӑ кӑмӑлсӑрланҙӗҫ Илйин йулташ ҫинҙен райхаҫатра вуласа пӑхсан.

— Асамăç!—çурăк хаçата таптаса илђĕ тепĕр хут Хĕритун.

— Вĕрентĕп епĕ сана ăмăртăва ђĕнме!—йунаса илђĕ сывлăша ўсĕрпе ўксе çĕмĕрнĕ сылтăм аллипе.

— Хапхи те хăй пекех ўсĕр, Мĕкĕте, пăх-ха!—пушă аврипе тĕллесе кăтартса хăварђĕ Хĕригунăн тайлăк хапхи çинелле „Ленин" колхосри йулашки токăвăрпа вăрман турттарма кайакансенђен пĕри.

# Сăран савăтĕнђе.

Пылђăклă, çинçе, тăвăр урам. Тумхахлă, ланкашкаллă пĕртен пĕр çул. Камĕнĕв урамĕ.

Ытти, йăвăç, çургсем хушшинђе лутакарах, хĕрлĕ ђул çурт

— Çакă и сăран савăђĕ?

— Çакă!

Уçă хапхаран кĕтĕм шал йенне. Хăмапа витнĕ лутака сарай. Тулли ђĕрĕ тирсем

— Çакă-и савăт?

— Çакă. Сана мĕн?

Сăнран арçын. Тумтиртен хĕрарăм Сасси çурмалла. Пўлсе тăђĕ ман ума пĕр çын.

— Тиректăра курма пулати?

— Çавăнта кĕр,—кăтартрĕ кантур йенелле.

Хăмаран тунă кивĕ çелник. Алăкĕ уçă. Сасартăк ђарăнтăм Темĕнле ђыхвăрсемлĕ, çынсен йађĕсемлĕ хăма ман умра: „107", „109", „101" Ку ђыхвăрсем уйăхри плана тултарса иртерсе йанă ђыхвăрсем иккен. Унта кашни тсех мĕнле ĕçлесе, хăйсен планĕçене йепле тултарса пынисене кăтартнă.

Çав хăма çинђех айаларах тĕрлĕрен хушаматсем. Кашнине хирĕç ђыхвăрсем. Ку ђыхвăрсем кашни ĕç-лекен плана мĕнле тултарса пынисене кăтаргаççĕ. Пурин те çĕрген мала. Йутăран кĕрсе пынă çын та, савăтри ĕçлекенсем те çав хăма тăрăх: кам, хăш тсех йепле ĕçлесе пынине пĕлме пултараççĕ.

— Тиректăр кунта и?—тесе ыйтрăм кĕнђелер „хуçинђен".

— Çук! Тулта пулас...

Каллех паçăрхи арçынла-хĕрарăм умĕнђеп иртмелле

— Ăçта?!—ђĕтретрĕ çурма сассине.

— Тиректăр патне.

Савăт тăрринђе сушшилккă—иккĕмĕш хут. Виççĕн ĕçлеççĕ сушшилккă алăкĕ умĕнђе. Такăшĕ тиректăр—пĕлме хĕн Виççĕшĕ те ĕçлеççĕ, тирсем виçеççĕ.

— Ман пага мар пуљ?—çаврăнса ыйтрĕ манран пĕр çамрăкки. Йăлтăрт-йалтăрт курăнђĕ хĕвелпе куçлăхĕ.

— Тиректăр патне!—палламасăрах пуç тайрăм ку çынна.

— Пăртак çех тăхтăр. Халех анатăп Тирсем илетĕп-хе ĕçлекенсенђен,—ăшшăн йумахласа илђĕ манпала тиректăр.—Курса çӳреме пултаратăр пирĕн савăта!—тепĕр хут сăмах хушрĕ çаврăнса.

Çавăнтах кĕрет пĕр алăк савăта. Пырса тăтăм. Тулли шыв. Ирсĕр, йăлмалла, хура кăвак шыв. „Çакăнтанах кĕмеллеши?“ шухăшласа пăхатăп шалалла.

— Хăратрим?—ђăтаймарĕ ыйтмасăр çамрăк тиректăр.

— Çук, сăнаса тăратăп!

— Пĕрле кĕрĕпĕр. Савăта кĕрсе курман пулас ха есĕр. Кунта сахал килсе çӳреççĕ вĕт. Хисеплемеççĕ пирĕн савăта. Есĕр ăçтан пулатăр?..

Çапла вĕçĕмсĕр калаçса пынипех çитсе те тăнă спĕр тирсене тăварлакан тсеха.

— Тăваттăн ĕçлеççĕ кунта,—пирĕн çине пăхмасăр ĕçлекенсем çине кăтартрĕ тиректăр.

— Та, ĕçлетпĕр.

— Кам патăр пире вăй?!

— Хамăрăн пулмаган...

— Тăр вăт хамăрпа ĕçлеме! Вара вăй пулат

Тăваттăн тăвată ответ çаплаттарса хуђĕç мана хирĕç рапођђисем.

Пысăк ђансем. Тытма та кансĕр, ирсĕр, йĕпе тирсем Тӳсме çук шăршă ку тсехра.

— 1928-мĕш çултанпа происвотствă пирĕн 100 прођђăн хăпарђĕ Çак ђансене хаљ 150 вигре кĕрет. Ĕлĕкхисене 80 витрешер кăна кĕретђĕç. Ĕлĕкхи ђансем

ĕçлесе çитерейместђĕç Савăт сарăлнă майĕне кăсене ге пысăклатмалла пулђĕ,—ђансем çине кăтартса иртрĕ тиректăр...

— Çтелнă ĕçлеттĕри?

— Çтелнă! çтелнă ĕçлемесен ăçтан пурăнан.

— Нумайранпа ĕçлетни кунта?

— 28-мĕш çултанпа. Килте ђухăн пурăнатпăр. Çиме те çитместђĕ пирĕн нихăçан та. Тавай савăталла шăвас ĕçлеме терĕм. Килтĕм те кĕтĕм çак савăта. Малтанах ĕçлеме пĕлместĕмђђĕ те йăвăртарахђĕ ĕçлеме. Хађ ниђђево, вĕренсе çитрĕмĕр. Утарлă ĕçлетпĕр ĕнтĕ. Преми илнĕ утарлă ĕçленĕшĕн,—утарлă ĕçленĕшĕн преми илнĕ утарнĕк Иван Миххайлăв çапла савăнса калаçат хăй ĕçĕшĕн.

— Ку йулташ та преми илнĕ,—тирсене савалакан патне çитсе тăтăмăр хуллен çавăрăнса çӳресе.

Йĕпетнĕ тирсене станок çине хунă та саваламаллипех савалат.

Тир çумĕнђи çу катăкĕсем. аш татăкĕсем сĕвĕне-сĕвене ӳкеççĕ

— Хăшпĕр ђух пĕђђен ĕлкĕрсе пыратăп. Анђах нумайа мар. Питĕ те ывăнтарат. йăвăр ĕç. Латнă хађ вĕренсе çитнĕ, апграмастăп. 28-мĕш çултанпа ĕçле-тĕп вĕт.

— Утарнĕк и?

— Утарнĕк Епĕр савăђĕпех утарнĕк. Утарнĕк пулмасан ăçта утарлăн ĕçлетĕн? Преми илме те çук вара. Парапансен тсехĕ. Питĕ те мăнă, хăйаккăнла пиђкесем. Тимĕрсем çинђе çакăнса тăраççĕ. Çурмашар тулли шыв. Тирсене йамалли тăваткăл шăтăк. Çак пиђкесене йарса ђӳкеççĕ тирсене.

— Иртнĕ çулсенђе ку тсех вырăнĕнђе хваттер пулнă. Ку тсеха хваттертен—пурăнакан çуртран турăмăр. Ку тсеха тăвађђен тирсене ђӳхеме Атăла лашапа тийесе çӳренĕ. Питĕ те ђас пулмастђĕ. Çигменнине тата хакла ларађђĕ. Хађ.. пиђкесем çине шыв хăйех килет,—ђăрр-р-р йађĕ пиђке çине крана пăрса тиректăр.

— Çавăрăнасса та хăйех çавăрăнат. Настойашђи савăтри пек,—ђăк пăрђĕ електритсă кнопкине пĕр самăр кĕлеткеллĕ, сарлака шĕвĕр уссиллĕ хурарах çын.

Шăмпăлт-шампăлт, шăмпăлт-шампăлт çавăрăнма тытăнђĕç пиђкесем.

— Ахаљ çавăрма йурамаст. Тпру, стой!—ђăк пăрђĕ елекритсă кнопкине.

Шăмпăл-шампăл, шăмпăл-шампăл. Тăп ђарăнђĕç пиђкесем.

— Çапла ĕçлетпĕр! —мухтанђĕ уссилĕскер.

Вăл—Крип, Станислав Михайловиђ. Пегем савăђепе аслă маçтăр 1929-мĕш çулхи нойапĕртен, лайăх ĕçлесе, плана ытлашшипех тултарса пынăшăн, икĕ хут преми илнĕ. 6-мĕш уйăх пĕр канмасăр ĕçлет.

— Ма канмастăр вара?

— Ĕçлекенсем çук хам вырăна Çамрăксене ђасах вĕрентсе çитермелле мар. Вĕрентетĕп. Вĕрентмен мар Анђах йăвăр ĕç вĕт. Аçтан сасартăк. . Маçтăрсем мар, ахаљ рапођђисем те çитеймеççĕ пирĕн. 19 çын ĕçлемелле Хаљ епĕр 14-ăн кăна ĕçлетпĕр. Плана çапах та ытлашшипех тултарса пыратпăр. Пур савăт та пирĕн пек ĕçлесен...

— Станислав Михайлыђ!—ђĕнсе илђĕç тепĕр тсеха.

Хăйĕн йăвăр кĕлеткине пĕр йенђен те тепĕр йенелле йăвăррăн сулăнтарса, пысăк-катмар аттисене аран сĕтĕрнĕ пек туса утрĕ хăйне ђĕннĕ çĕре аслă маçтăр.

— Питĕ те лайăх ĕçлет,—савăнса йулђĕ маçтăр хыçĕнђен тиректăр.

— Машшин пайне кĕрсе куратпăр?—ытарлă ыйтрĕ манран çав хушăрах.

Пысăк пӳлĕм. Правус пек пĕр пысăк машшин. Тĕрлĕрен винттăсем, кайккăсем. Унган та кунтан та тыттарнă тимĕрпе.

— Çак локомопиле илесшĕн çунса çӳрерĕм. Малтанах кунтан ирĕк памарĕç илмешкĕн. Кайарахпа ирĕкне пађĕç. Анђах, машшинĕ тупăнмаст. Пенсăна кайса илтĕм. Кивĕђђĕ. Хăшпĕр пайĕсем те çукђĕ. Кунта йусаса лартрăм Çакăнпа пĕтĕм савăта ĕçлемелле тăвас тет-

пĕрте-ха. Ытти хатĕрсем çитмеççĕ-ха вăт. Хађ шыв кăна вĕретегпĕр. Вăл пулмасан савăта вĕри шыв çитерме питĕ те хакла лармалла. Унпала пигĕ те йўне ларат. Електригсă вăйĕпе ĕçлет. Шыв кунтанах илетпĕр. Çакна кăна пăрмалла,—пĕр винттине пăрса локомопиле ђашкăртма та тапратрĕ. Тепĕр май пăрђĕ—лăпах ђарђĕ.

—Йăвăр мар,—вĕçкĕнĕн калаçса илђĕ ман çине пăхса.

— Çакă тирсене типĕтмелли тсех пулат. Анђах савăта еккономи тăвас тесе, çулла ĕçлеместпĕр. Хађ, ку вăхăтра çанталăкпа усă курас майĕпе, тулта, типĕтетпĕр. Хĕлле ку тсех та локомопилпех ĕçлет,—машшин пайĕнђен тухса типĕтмелли тсеха кĕртсе кăтартрĕ тиректăр.

Çўлти хугра хром тсехĕ, тиртен сăран пулса çитнĕ маттериалсем ку тсехра.

— Кусем йакалсах çитеймен ха. Ак çак машшин çинђе йакататпăр. Електригсă вăйĕпех ĕçлет Хам тунă ку машшина,—пĕр çĕртен пырса пусрĕ те, ĕçлеме те тытăнђĕ машшин. Йака мар, катрашкаллă сăран пĕр-икĕ минут хушшинђе çап çутă пулса тухрĕ.—Вăт çакăн пек пулат. Рапођђисем ĕçлениђе курайманăр ĕнтĕ ку тсехра Рапођђисем апата кайрĕç,—машшина ђарса, хром сăрана йăваласа кăтартрĕ мана

Шăп 11 сехет. Ку тсехра пĕр рапођђи те йулман. Никам та çук. Рапођђисем апата кайнă иккен. Апат вăхăђĕ.

— Столовăй кунтахи сирĕн?

— Та, ку самăй çитменлĕх пулса тăрат. Столовăй çук пирĕн. Пурђђĕ. Тепĕр тсех çĕнĕрен уçрăмăр. Çавăнта кайрĕ столовăй. Хам хваттере те патăм çавăнтах. Хам та хваттерсĕр, рапођђисем те столовăйсăр тăрса йултăмăр. Çак кĕркунне майлаштарса савăт çумĕнђех тăвас тетпĕр ĕнтĕ столовăй. Хађ вĕсем—рапођђисем çўлти, рапођђисен столовăйне çўреççĕ те. . Канçĕртерех пăртак Нк канаймаççĕ, ни пĕђĕк пуху пеккисем туса иртерме те май килмест.

— Атă-пушмак çĕлемелли маçтерской уçрăмăр-ха тата. 15 çын ĕçлеççĕ. Уйăха 350 мăшăр тăваççĕ Сатани

300 мăшăр кăна та. 50 мăшăрне рапоҫҫисем планран иртерсе тăваççĕ. Ку уйăхра ҫылайрах кăлараççĕ пулас-ха. Лайăх ĕçлеççĕ. Ак тытса пăхăр-ха,—тыттарҫĕ мана питĕ те илемлĕ сарă пушмаксем.

— Ман урари пушмак та çакăнта тунăскерех пулҫ еппин? — хам урари пушмакпа алăри пушмака танаштарса.

— Мускавра çĕленĕ тетĕри тата есĕр?

— Мускавра çĕленĕ тесе епĕ ҫăнах та..

— Кунтах çĕлетпĕр те-ха вĕсене. Анҫах, рапоҫҫисен ĕç условийĕсем йурăхлă мар-ха ку пӳлĕмре. Тăвăр. Тĕттĕм. Çутă та, сывлăш та çителĕклĕ мар. Тухасси тухатпăрах та-ха ку нушаран та. Çак кунсенҫех пулаймĕ ĕнтĕ. Рапоҫҫисем те вăрçаççĕ хама та.

— Невозможно работать в этакой мастерской,—çавăнтах сăмах пеҫĕ пĕр вырăс маçтăр.

— Питĕ те йапăх условире ĕçлетпĕр,—пуриншĕн те витерҫĕ аслă маçтăр.

— Пулат акă майĕпех,—тесе лăплантарҫĕ ăна тиректăр.

Оттелăҫнăй тсехри утарнĕгсă Руптсовă Клавтийе илсе кăтартам сире. Илемлĕ кĕлеткеллĕ. Вăтам, сарă хĕр. Çӳхе туталлă. Хĕрлĕ сăнлă ҫăмăр пиг. Пĕҫĕкрех, шĕвĕртерех çӳхе сăмса. Йăлтăргатса, выҫăнса тăракан çутă куç. Хăйĕнҫен малтан кулаççĕ куçĕсем.

— Виçĕ çул ĕçлетĕп çак савăтра. Пирĕн пурнăçра çавăн пек ăнăçлăх пур. Манăн атте те савăтрах иртернĕ хайĕн пурнăçне. Епĕ те атте çулĕпех кайас терĕм. Йуратсах ĕçлетĕп хам ĕçе. Премине те пĕрре кăна илмен ĕнтĕ епĕ. Премийе наҫар ĕçлекенсене памаççĕ ăна, прăт,—кăтăр каснă сарă çӳçĕсене йусаса каласа парат хăй пурнăçĕ çинҫен Рупгсовă угарнĕгсă.

— Николай Тмитриҫ, есĕ ку савăтри ĕçе питĕ те витĕр пĕлни, кашни машшина, кашни ĕçе ху аллупа ĕçлеттерме пĕлтерни шалтах тĕлĕнтерсе йаҫĕ мана. Мĕнле çав тери ăстаçă вара есĕ ку савăтра?—ыйгу патăм тиректăра пĕрре сăмах майĕпе.

— Та, йулташ, ҫапла ҫав. Тирекгăр тесе, алла кайалла тытса ҫӳрени килĕшмест. Технĕккăна алла ҫаварса илмелле. Технĕккă, реконструкси тапхăрĕнҙе, пурне те тăват. Ҫавна манмалла мар. Ăна Сталин йулташ та ҫаплах калані. Епĕ савăтра тиректăр шуҙĕпе атминистраттăр, ĕҫе тăрсан—машшинсем хушшинҙе—аслă маҫтăр пулмалла, пур ĕҫе те пĕлмелле. Унсăрăн савăт пиҙĕ хуралма пултарат. Ăнсăртран пĕр-пĕр тсехри машшин ҙарăнса ларсан—кам патне каймалла? Ăна манăн йусамалла. Рапоҙҙисен куҫĕ умĕнҙе туса, вĕсене вĕрентмелле. Вĕсенҙен пирĕн кашнинҙен хĕрлĕ ăстаҫă тума тăрăшмалла. Политехнисатси тенине те ҫапла ăнланмалла пуҙ тетĕп вара епĕ, ҫапла пекех туйăнат,—пат ҙарҙĕ тиректăр хăй сăмахне, ҫакăнса тăракан ҙĕрĕ тирсем хушшине кĕрсе кайса.

Тиректăр—Николай Тимитриҙ Папинтсĕв—ҙăн-ҙăн хĕрлĕ тиректăр. Рапоҙҙисемпе пĕр ҙĕлхеллĕ. Рапоҙҙисем ăна йуратаҫҫĕ. Вăл хăй те йуратат вĕсене. Савăтра вăл пĕлмен ĕҫ пĕр пĕрҙĕ палăрмаст. Пур ĕҫре те ăстаҫă.

— Николай Тимитриҙ, мана утостоверени парăр-ха. Вĕренме кайас тетĕп,—тиректăр тирсем хушшинҙен тухнă ҫĕре пырса тăҙĕ пĕр ҫамрăк рапоҙҙи.

— Тĕрĕс. Вĕренес пулат. Ҍĕренме кайнипе кăна мар, килте вĕренме тăрăшас пулат. Есĕ хаҙ саоҙнăй курсра тăратăн вĕт? Саншăн епĕр укҫа тӳлетпĕр саоҙнăй курса. Ку таранҙҙен сана епĕ пулăшса пынă йаланах. Малашне те пулăшмасăр тăрас ҫук. Кунта ĕҫлесе савăта та пулăшатăн. Ху та укҫа тупатăн. Ҫитменнине тата пирĕн ахаҙ те рапоҙҙисем ҫитмеҫҫĕ. Шухăшласа пăх-ха хăвах,—ăшшăн рапоҙҙи умне тăрса калаҫрĕ тиректăр.

Рапоҙҙи ни килĕши, ни килĕшми тăҙĕ тиректăр сăмахĕпе. Анҙах нимĕн те ҙĕнеймерĕ. Килешрĕ пулас.

— Пăртак тăрсан кĕр хам пата. Калаҫса татăлăпăр,—лăплантарҙĕ рапоҙҙийе.

Рапоҙҙи вăрахăн ҫавăрăнса утрĕ савăт корпăсне. Кайран куртăм епĕ ăна тиректăр патĕнҙе. Калаҫатҙĕҫ.

— Интереснă килсе кĕтĕм çак савăта ĕçлеме. Хусанти тир-сăран техникăмĕнҫе вĕренеттĕм. Фискуљттурнĕк епĕ. 1928-мĕш çулта Йанейĕв йулташпа паллашрăм. Конеҫно, фискуљттур вăйинҫе. „Вĕренсе тухсан кил пирĕн пата ĕçлеме“ тет çакăскер. Килтĕм вара 1929-мĕш çулта, техникăм пĕтерсен. Епĕ кунта килнĕ ҫух савăтра мĕн пурĕ те 4 рапоҫҫи кăна. Епĕ 5-мĕш рапоҫҫи пулса ĕçлеме тытăнтăм. Ун ҫух тиректăр тавраш пулман. Савăҫĕ те пĕр пӳлĕмре кăнаҫҫĕ. Хаљ çак çулсем хушшинҫе, ҫылай саргăмăр ĕнтĕ савăта. Тата тепĕр çакăн ҫухлĕ сарса, пур тсехĕсенҫе те машшин вăйĕпе ĕçлемелле тăвас тесе, пĕлтĕрех çметтă—план тăратрăм. Анҫах кăçал та нимĕн хыпар та каламаççĕ. Паллах, сотсиалисăм тапхăрĕнҫе савăта ку виçепех тăратса хăварма май килмест. Ăна сарса, машшинлатса, Ҫăваш республĕкĕнҫе паллă савăт тума тăрăшас пулат. Çак тĕлĕшпе çӳлти оркăнсен шухăшласа пăхмаллах. Çулталăкшар плансене нимĕн пăхмасăр тытса усрани килĕшӳсĕр ĕç вăл,—сассине хăпартрĕ тиректăр ку тĕлте.—Рапоҫҫисемпе килĕштерсе вĕсен çирĕп вăйне вырнаçуллă ĕçлеттерсе пынипе—пĕлтĕрхи утарлă кварттăл планне ахаљ сăранпа 115 проҫҫăна йахăн, хромпа 166 проҫҫăна йахăн тултарса, кăçалхи çул планне хирĕçле план кăларса тăратса кĕгĕмĕр. Кăçал та рапоҫҫисем çителĕклĕ мар пулин те, кашни уйăх планне 100 проҫҫăнран иртерсе тултарса пыратпăр, 1927-мĕш çулхи ҫыхвăрсемпе танлаштарса шутласан, савăт кăларакан прогуксине кăçал 660,4 проҫҫăна çитертĕмĕр.

Паллах, çитменлĕхсем те çук мар. Пур-ха пирĕн çитменлĕхсем те. Тавар пахалăхне çӳлĕ вырăна çитерсе тăратайман ха. Хăйне ларакан хака та кирлĕ таран ҫакарса лартман. Рапоҫҫисен пурнăçне йусас тĕлĕшĕнҫен те ҫылай ĕçлемелле, Сталин йулташ сăмахне те пурнăçламалла. Вĕсене епĕр рапоҫҫисен çирĕп вăйпеле, виçкĕтеслĕх çураçуллă килĕшсе йертсе пынипе пурнăçласа çитеретпĕрех. Çак савăт Ҫăваш республĕкĕнҫе паллă савăт пулмаллах. Ăна епĕр тăватпăрах,—çак

сăмахсене шантаруллă каласа ала пађĕ мана йулашкинђен сăран савăтĕнђи хĕрлĕ тиректăр Папингсăв.

## Хосрашђутлă тсех.

Шăп çитсе тухрăмăр хосрашђут тĕлне. Ну и тытăнтăмăр вара кунта калаçма.

— Не-е-ет! На такую удочку не пойдем!—пĕтĕм сăмаха татса хуђĕ „Красная Чувашия“ прикатинђе ĕçлекен Скрыђов.

Темиçе рапођђи те туха-туха калаçрĕç. Хăшпĕрисем куçасшăн. Теприсем тăхтасшăн. Ђылайĕшĕ ђĕнмеççĕ. Ĕç тухмарĕ кĕçĕр каç, салантăмăр.

Уйрăмăн рапођђисемпе калаçусем тума тытăнтăмăр. Пурте килĕшеççĕ уйрăм калаçусенђе.

Тепре пухăнтăмăр. Хосрашђуга куçма пумайĕшĕ килĕшеççĕ рапођђисем.

— Нет. На такую удочку не пойдем!—пуриннĕн те сиксе тухрĕ каллех Скрыђов.

— Тен епĕр куçатпăр?

— Сан пек ўссĕр халăх хыççăн кайсан!..

— Куçсан, ш■ђатнă, лайăхрах!

— Куçатпăр!—харăсларĕç рапођђисем.

— Епĕ куçмас ăп!—хирĕçлерĕ Скрыђов.

— Епĕр куçатпăр.

— Çиђђĕн пĕр çынна кĕтмеççĕ!—отпор пађĕç рапођђисем Скрыђова.

Ђăвашистатăн пĕрремĕш № лĕ типокрафинђи хаçат напорлакан тсех çапла хосрашђута куçрĕ.

Тсехра мĕн пурĕ виçĕ прикатă ĕçлеççĕ: „Канаш“, „Красная Чувашия“, тата „Çамрăк колхоçнĕк“ прикатисем. Хосрасшђута куçиђђен çак виçĕ прикатăра 64 çын ĕçленĕ. Хосрашђута куçнă хыççăн вун-иçĕ çынна ытлашки вăй шугласа тепĕр типокрафине куçарђĕç. Вара виçĕ прикатăра йалан ĕçлесе тăма 65 çын вырăнне 51 çын кăна йулђĕ.

Çав вăхăтрах кивелсе йурăхсăра тухнă саспаллисене уйăрса илсе 937 килокрам çĕнĕрен шăратакан савăта йанă. Вăл мĕн пурĕ 220 тенкĕ те 11 пус тăрат.

Хосрасшђута куçиђђен 1000 саспаллине напорлама 1 тенкĕ те 53 пус тăнă пулсан, хосрасшђута куçнă хыççăн 1 тенкĕ те 36 пус кăна тăракан пулђĕ. Уйрăмлăхĕ 17 пус пулат.

Мĕн пур тăкаксене, тупăшсене шутласа кăларнă хыççăн вара, хосрасшђута куçнă майĕпе хаçат напорлакан тсехра тăвата уйăх хушшинђе 7.097 тенкĕ те 90 пус тирпейленсе йулђе. Ку вара пĕр çулталăк хушшинђе типокрафин хаçат напорлакан тсехрах 18 пин ытла тирпейленсе йулассине пĕлтерет.

Напоршђĕксене, распоршђĕксене кашнине уйрăм кассă çумне çыпăçтарнă. Распоршђĕксем кашни хăйсем çумне çыпăçтарнă кассăшăн ответлă. Капла туни саспаллисене кассăна салатса хунă ђухнехи ответлăха пысăклатат. Йăнăшсем сахалтарах пулаççĕ. Ĕç пахалăхĕ, унăн тухăçлăхĕ хăпарат.

Хосрасшђута куçсанах малтанхи пилĕк кунĕнђе ĕç уксаклама та пăхрĕ. Анђах малаллахи кунсенђе йусаннăçем йусанса пыђĕ.

Ĕçе кашни кун шута илсе пырса, кашни пилĕк кунта пĕрре кам мĕн ђухлĕ ĕçлесе пынине кăтаргакан таплитсă çакăнса тăрат. Ку таплитсă тăрăх кам мала тухни, кам кайа йулса пыни питĕ те лайăх курăнат. Кашни хăй мĕн ђухлĕ ĕçленине, ун йулташĕсем мĕн ђухлĕ ĕçленине витĕр пĕлсе тăраççĕ. Çакă та уйрăм йулташсен ĕç тухăçлăхне нумай хăпартрĕ.

Çентапĕрĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнђе хаçат напорлакан тсех хăйĕн планне 141 прођђăн тултарђĕ. Ĕç тухăçлăхĕ 41 прођђăн хăпарђĕ.

Малтанхи кунсенђе ĕç пахалăхĕ питĕ те уксаклатђĕ. Лартма вырăн йулмиђђен пулатђĕç йăнăшсем. Кашни нумайрах напорласшăн тăратђĕ. Çак çитменлĕхе пĕтерес пирки кранккăна кам напорланă—йăнăшсене тӳрлетме те хăйнех памалла турăмăр. Ĕç тухăçлăхĕ ђакма мар, пахалăхĕ хăпарђĕ. Халђ ĕç пахалăхĕ вăтам вырăнта.

Курăнмалла вырăнта çакăнса тăракан таплитсă ĕç тухăçлăхне çех те мар, ĕç пахалăхне те кашни кун шăн кăтартса тăрат.

— Иртнĕ пилĕк кунлăхра манăн 147 проЂЂăн тулнăЂЂĕ,—тесе хăй йулташне кăтартат Муххин кăнтăрлахи канура.

— ХаЂ?

— ХаЂ 143 проЂЂăн кăна. СнаЂЂăт, кăвар ытларах хумалла пулат.

— Ман иртнинЂен 9 проЂЂăн хăпарнă. Тата çине тăмалла. Райккĕна çитересЂĕ.

Хăйсен хĕрÿллĕхне хăпартасси çинЂен калаçса, хавасланса утаççĕ напорнăй тсехалла.

— Шăнкăр, шăнкăр, шăнкăр!—апат канăвĕ пĕтнине пĕлтерЂĕ шăнкăрав.

Пурте вырăнта. „Шăкăрт, шăкăрт, шăкăрт“ кĕрсе вырнаçаççĕ тăхлан саспаллисем верстаткă ăшне.

„Лăнк, лăнк, лăнк“—Ђăх сăххилле выЂаççĕ рапоЂЂисен пуçĕсем саспаллисем пухнă май.

— МакçимЂЂă!

— Йакковлĕв!

— Тискат!—кранккăсене машшин айне хĕстерме Ђĕнеççĕ напоршЂĕксем.

Паттăрăн ĕçлеççĕ прикатăсем. СкрыЂов çук ĕнтĕ. Кайрĕ пирĕнтен уйăрălса.

— Тасални паха!—тесе ăсатрĕç ыттисем.

Çитĕнÿсене шута илсе, йанварĕн 1-мĕшĕнЂен пуçласа, напоршЂĕксем хăйсен нормисене хăпартма йышăнЂĕç. ХаЂ çĕнĕ нормă—хирĕçле план норми.

Çапла ĕçлет хосрасшЂутлă тсех.

# Рутникре.

Вăрнар стантси. Çак стантсăра ĕнтĕ фосфорит савăЂĕ. Ваксалтан Мускав йенелле, Ђукун çултан сулахайалла тăвалла илемлĕн курăнат ку савăт.

У-у-у-у!—кăçкăртат хăйĕн çинçе, уçă сассипе вăрмана. Уçă сывлăшлă вăрман савăнат ку саспа. Кăккăр тулли çăтса вăраххăн та вăраххăн çухатат хăй ăшне.

Çменăсем улшăнаççĕ савăт сассипе. Савăт сассипех виççĕ вăхăта Вăрнар çыннисем.

Кунĕн- çĕрĕн ĕçлет ку савăт. Кунĕн-çĕрĕн авăртат фосфорит. Аçтан тупат-ха вăл савăт çав тери çимĕçе? Виçĕ çĕртен: Вăрнар, Йăрар, Санаруй-Уравăш. Çак виçĕ вырăн тăратаççĕ ăна ђĕр çимĕç.

Вăрнар. Вăрнарти шахтă. Пĕрмайах ĕçлеймест иккен ку шахтă. Акă октапĕр уйăхĕнђе шыв илнĕ ку шахта. Нимĕнле майпа та хăтăлайман вăл шывран. Вăхăтлăха ђарнă вара ĕçлеме. Çавăнпа та вăл вăхăта Вăрнар шахти парайман савăта ђĕр çимĕç.

Йăрар. Вăрнартан çурçĕр йеннелле çиђ-сакăр çухрăмра. Савăтпа Йăрар хушшинђе кукăр-макăр карăнса выртат çинçе ђукунçул. Çав ђукунçул тăрăх пĕђĕк вакунеткăсемпе турттараççĕ савăта фосфорит.

Савăт йышăнат. Анђах ђăмлама ĕлкĕрсе çитеймест. Вуникĕ тоннă тавар туса кăлармалла савăтăн кунне. Ултă тоннă аран-аран кăларат. Çавăнпа та савăт хăйне панă плана 40 прођђăна йахăн кăна пурнăçлат.

Çавăнпа та октапĕрте Йăрар ĕçлемест. Анђах ку вăхăтлăха кăна. Савăта çĕнĕ майлă тирпейлесе çитерсен — Йăрар каллех ĕçре. Савăт çĕнелнĕ—Йăрар ђĕрĕлнĕ. Йăрар вĕрет ĕçпе. Вăл октапĕрте те ăйхăпах çывăрман. Малтан кăларса купаланă фосфорит кунĕн-çĕрĕн куçнă кунтан савăта. Çинçе ђукунçул релссисем тутăхман. Вĕсем çутă. Хăйсем ĕçленине палăртса выртаççĕ Йăрарпа Вăрнар хушшинђе.

Уравăш рутникĕ. Вăрнартан хĕвелтухăç йенелле тăхăр çухрăмра Улăхлă çырма. Çырминђе пĕве. Çу кунĕсенђе çак пĕвере шыва кĕреççĕ рапођђисем рутникрен пиçĕхсе тухсан. Пĕвине те пĕвеленĕ хăйсемех. Кĕрлесе кăна йухса выртат кĕр кунĕнђе ку пĕве. Лайăххăн ĕçлемелле пĕр ђуллă арман.

Çурçĕр йенђе те, кăнтăр йенђе те тăвайкки. Кăнтăр йене сĕвек. Тырпул уйĕ. Уравăш колхосĕн уйхирĕ.

Çурçĕр йенĕ—ђăнкăлла тăвайкки. Çак тăвайкки айĕнђе ĕнтĕ пуйанлăх. Çак тăвайкки айĕнђе рутник. Çакă вăл «Уравăш рутникĕ».

Çĕр мунђа алăкĕ пек курăнат ту айккинђе пĕр шăтăк. Çакăнтан кĕмелле рутнике. Ку—пĕрремĕш рутник.

— Спетсовккă тăхăнăр! рутникре ĕçлемелли тумтирсем тăхăнтартрĕç пире рутнике кĕриђђен.

— Тата ђылай вăхăт ĕçлемелле-и малтанхи çменăн?—ыйтрăмăр рутник алăкĕ умĕнђе.

— Виçĕ сехет ытла.

Пĕр-икĕ ђалăш кăна кĕнĕђђĕ.

— Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр!—пĕђĕк вакунеткă сасси илтĕнђĕ пирĕн умра.

— Кайалла тухатпăр. Вакунеткă килет!—васкатса систерђĕ рапођђи Петук.

— Малтан тулти рапођђисенђен ыйтмаллађђĕ сирĕн. Вакунеткă айне пулатпăр вĕт!—хăранă пек пулса асăрхаттарђĕ техноруук.

Рутникре пĕр мăн çул. Çав мăн çул тăрăх лăп та шăп вырнаçса çÿрет вакунеткă. Хирĕç мĕн пулсан çăлăнăç çук сан вађђи. Йе—таптан вакунеткă айĕнђе; йе—тар кайалла мĕн пур вăйупа.

— Хирĕç тухмалли вакунеткăсем пури урăх?—рутник алăкĕ умĕнђе пирĕнтен иртсе пыракан вакунеткăллă рапођђирен ыйтрĕ техноруук.

— Çук—вакунеткăна шакăртаттарса иртрĕ рапођђи. Каллех рутникре. Каллех çав тăвăр та лутра «мăн çул» тăрăх пĕшкĕрĕнсе пыратпăр малалла.

— Пĕшкĕнеререх пырар. Пуçăрсене ан перĕнтерĕр. Ку тĕлте тата та лутра!—асăрхаттарса, йертсе пырат техноруук.

Мĕн пĕшкĕрĕннĕ таран пĕшкĕрĕнсен те хăшпĕр тĕлте перĕнетпĕр мађђана.

Ђĕрĕ, тасамар сывлăш. Ура сыппи таран пулаççĕ урасем пылђăка.

— Поттинккăсем çаплипех хывăнса йулаççĕ хăшпĕр ђух,—пылђăк утма паманни çинђен калаçат Петук. —Çилĕм пек тытат!—хушат çавăнтах.

Вырăнăн - вырăнăн релссăсем курăнмаççĕ шывпалла. Шыв айне путнă пĕтĕмпех.

— Хăмасем тăрăх утма тăрăшăр! тесе асăрхатарaç çĕ пире.

Пылђăкран, шывран хăтăлма хăмасем сарнă çула тăрăх. Анђах вĕсем те курăнмаççĕ хăшпĕр хушăра. Вĕсем те пылђăк айĕнђе.

Сылтăм йенĕпе пырăр. Çăла ан кайăр!

Çавăнтах çăл. Шыв палкаса кăна тухаť айалтан. Асăрхамасан—йĕпенме пулаť лайăхах.

Акă рапођђисем ĕçлекен вырăна çитрĕмĕр.

Мăн çултан пĕђĕк шăтăксем кĕре-кĕре кайаççĕ айăксенелле. Сылтăма та, сулахайа та шатăксем.

— Кĕрсе куратпăр?!

Сылтăмалла, хăйаккăн упаленсе кĕретпĕр пĕђĕк шăтăка. Рутнике кĕрсенех нимĕн те курман куçсем хăнăхрĕç, кураççĕ. Акă, хамăр умра мăкăлтетекен рапођђисене те куратпăр лайăхах. Вĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсем сапакан тăпрасенђен хăшпĕрисем ӳкеççĕ пирĕн çине.

— Çакă ĕнтĕ массă пулаť,—пирĕн умра купаланса выртакан тăпрасем çинђен ăнлантарса параť техноруk.

Массă—фосфорит ђавнă çĕртен тухакан кирлĕ мар тăпра. Вăл нимĕн тума та кирлĕ мар. Анђах вăл тăпрана ђавса кăлармасăр фосфорита тӳрех ђавса илме çук. Çав тăпрана кăларса пынă май тухаççĕ: фосфорит, сланте, тата ытти çĕр айĕнђи пуйанлăхсем.

— Тăнк! Тăнк! Тăнк!—илтĕнет киска *) сасси пирĕн умра.

Пĕр рапођђи хăйаккăн выртнă шăтăкра. Хăйаккăн выртса касаť фосфорит ђулне. Минтер пысăкăшĕ антарђĕ пĕр ђул.

— Пĕр пăт ыгла туртаť пуљ ку?—тĕлĕнетпĕр хура ђул катăкĕнђен.

— Пĕр пăт?— тĕлĕнђĕ рапођђи.

— Сахалтан та пилĕк-ултă пăт!—тӳрлетрĕ тепри.

Пилĕк-ултă пăт туртакан ђул катăкне хăйпăтаť кискапа. Тепри ăна ăсатаť тулалла. Пĕђĕк шăтăк. Çавăрăнкалама тăвăр. Анђах ирĕклех ĕçлеççĕ çавăнта.

*) Киркă, кайла. Рет.

— Ват менле ěçлетпěр,—хăй ěçěне мухтанаť хăйаккăн выртса ђавакан, мана паллакан рапођђи.

Пěр шăтăкран тухса тепěр шăтăка кěрегпěр. Унта та çав ěçех ěçлеççě.

— Ку фосфорит,—сийěн курăнса тăракан ђула шаккаса кăтартаççě рапођђисем.

— Ку сланґс, — çавăнтах тепěр си курăнаť йунашар.

Мăн çултан пăрăнса кěрекен çулсем те пур. Вěсем те хăйсенђен уйăрса йенне йенне шăтăксем тăваççě. Çав шăтăксенђе каллех пуйанлăх ђаваççě.

— Çăтăр-çăтăр!—çатăртатрěç ругнике çирěплетнě тěкěсем.

— Кăпăррр!—йăшăлтатрěç çав вырăнти тăпрасем.

— Ак хăрăр. Йăтăнмасť,—лăплантараççě рапођђисем.

Пынă çěртенех шăп пигěрěнсе ларђě пирěн мăн çул. Пěђěк шăтăк кăна йулђě пирěн ума.

— Ку вырăна хаљ кăна уçнă. Çак вырăнта пěрремěш ругникпе иккěмěш ругник пěрлешеççě,—çак сăмахсемпе упаленсе каçрăмăр иккěмěш ругнике.

Иккěмěш ругникре те çав ěçех ěçлеççě. Çав йапаланах катаççě шěвěр кискасем. Ку ругникне пěрремěш ругникрен пěр 200 ђалăш ытларах анатрах ђавнă. Çěр айěнђе авăнђăк çавăрăнса пěрлешеççě икě ругник. Пěлтěр кăсем уйрăмăн пулнă. Кăçал октапěр уйăхěнђе пěрлештернě вěсене.

— Икнатйěв, çирěплетсе пыратри есěр хăвăрăнне?

— Çирěплетеймен-ха. Çирěплетме тытăнатпăр!—ответлет теçетнике хирěç хăй шăтăкěнђен утарнěк Икнатйěв Павăл.

Хăйсем ěçленě вырăнсене рапођђисем хăйсемех çирěплетсе, тěкěсем персе хăвараççě. Çěнěрен кěрекен çмена вара йантăланă, çирěплетнě вырăна кěрет. Хăй ěçленě вырăна вăл та çирěплетсе, тěкěлесе хăвараť. Унсăрăн йăтăнма пултараť.

Ругникре угарлă, ăмăртса ěçлесси сарăлса çитнě темелле. Утарнěксем йунашар шăтăкрисемпе ăмăртса ěçлеççě.

— Вěсем мěнле?—хăйпе ăмăртакан йулташсем ҫинҗен тěпҗет Икнатйěв теҫетникрен.

— Виҫмен-ха. Виҫетěп. Ҫменă улăшас вăхăт ҫитет. Тата 10 минут кăна. Тавай сирěнне те виҫем,—Икнатйěв патне виҫме кěме тăрат теҫетник.

— Виҫ-тăват кěреҫе кăна утмалла. Тăхта-ха. Вěсенне виҫсе кил малтан,—хыпаланса ывăтат тăпрана Икнатйěв.

Ҫменă улшăнҗě.

# Пукҫирлă прикатă.

Виҫě сын анса йулҗěҫ кăнтăрлахи пуйăсран Йěпреҫ стантсинҗе: икě арҫын, пěр хěрарăм. Пěр арҫынěпе хěрарăмě питě те ҫамрăк. Иккěшě те пěр сăнлă: сапсарă та йапйака. Вунсакăр ҫул, ҫирěм ҫул памалла вěсене ҫул тăрăх шутласа. Тепěр арҫынě пăртакҫă аслăрах пулас. Сăнě те унăн тăлпам, кěлетки те хулăмрах. Ҫŷлти тута хуппи тăрринҗе хырăнсан йури хăварнă хура кěске усси.

— Райěҫтăвком ăҫта кунта? тесе ыйтрěҫ ансанах кутамккисене ҫурăмěсем ҫине хурса тŷрлетсе.

— Җиркŷ хыҫěнҗе. Ҫакăнтан каймалла,—кăтартса йаҗě пěр вăтам кěлеткеллě, сар сухаллă сын.

„РОНО“ тесе ҫырнă алăкран кěрсе кайрěҫ Райěҫтăвкома ҫитсен пойăспа килнě виҫě сын.

— Хăшě кунта сирěн „Комиссар просвешҗени?“—йăл кулса ыйтрě ҫамрăкки алăкран кěрсенех ларакан пěр ҫамрăк аҗаран.

— Епě пулатăп, кунта килěр!—кăмака хыҫěнҗе кăшт хура ҫŷҫлě пуҫне кăтартрě, хура уссиллě пěр вăтам ҫулхи сын.

— РОНО пуҫлăхě Ҫинтаҗкěн,—аллине кăнтарҗě вăлах килнě сынсене.

— Хут пěлменлěхпе кěрешес ěҫе пулăшма Вăрнар районěнҗен килнě пукҫирлă прикатă,—раппăртларěҫ виҫҫěн.

Йассонăв Никита,—ал пырса тытрě Ҫинтаҗкěн йулташа сарă, ҫамрăк арҫынě.

— Çеменăв Çтаппан —тесе паллашрĕ хулăмраххи.

— Меçниккова Нинă!—çамрăк хĕр саççипе пĕлтерђĕ хăй çинђен сарă çамрăк хĕр.

— Ларăр!—пукансем кăтартрĕ Çинтађкĕн йулташ.

Ĕç çинђен калаçу пуçланђĕ кун хыççăн. Çинтађкĕн йулташ хут пĕлменлĕхпе кĕрешес ĕç мĕнле пыни çинђен каласа паллаштарђĕ. Район тăватă потрайона пайланса ĕçленĕ. Самăй йапăх потрайон Йĕпреç потрайонĕ.

— Йапăххипе кĕрешмелле çав пирĕн. Ахаљ те çӳреме те çывăхрах ку патрайонта,—килĕшрĕ пукçирлă прикатă.

Çĕркаçиђђен РОНО ĕçĕсенђе хут пĕлменлĕхпе кĕрешес ĕç çинђен çветĕнисем шыраса, йалсем тăрăх пайлаштарса, танлаштарса ларђĕ прикатă. Тепĕр кунне ирхине ирех тухса кайрĕç Йĕпреç йалсоветне.

Йĕпреç йалсовеђĕ самăй РОНО сăмси айĕнђе. „Сăмса айĕнђи йапалана çын курмасть тет“ тенĕ авалхи йумахра. Ђăн вара ку йумах. Йĕпреç РОНО хăй сăмси айĕнђи ĕçе те курман. Йĕпреç йалĕнђе хут пĕлменлĕхпе кĕрешес ĕç йапăхран та йапăх пынă. Ликпункта çавăрса илни ку йалта 50 прођђăн, вĕсенђен шкула çӳрекенни 50 прођђăн пулнă ку йалта.

— Мĕн ĕçленĕ вара есĕр ку йалта ку таранђђен?—тĕлĕнђĕ прикатă.

— Сире мĕн ĕç! ответлерĕ йалсовеђĕ.

— Как так мĕн ĕç?—сасă хăпартрĕ прикатă.

Йалсовет претçетаттĕлĕ пăргакçă çемçелђĕ, пиђĕ те хĕрелђĕ.

— Кампанисем иртернĕ,— ответлерĕ аран-аран, сăмах майран.

— Хут пĕлменлĕхпе кĕрешес ĕçе хак памастăр, спађђăт.

— Епĕ хам та хут пĕлместĕп те...—кахалланса хуш-рĕ йалсовеђĕн пĕр ђленĕ.

— Апла санран пуçламалла,—çавăрса илђĕç ăна прикатирсем.

Вичĕ кун ĕçлерĕ прикатă ку йалта. Виçĕ кун хушшинђе хут пĕлменнисене школа çавăрса илессине, школа çӳрессин прођђăние 87 прођђăна çитерђĕ.

Виçĕ кунтан Упакасси йенелле утрĕç икĕ арçынпа пĕр çамрăк хĕр.

Упакасси йалĕнђе тата та йапăхрах. Пуçтарăнмаççĕ те вĕренме ку йалта.

— Хут пĕлменлĕхпе кĕрешес тĕлĕшпе мĕн ĕçленĕ есĕр?

— Штравсем хурса тухнăђђĕ.

— Хăçан?

— Иртнĕ кĕркунне.

— Урăх тата мĕн тунă?

— Ĕçленĕ.

— Мĕн ĕçленĕ?

— Хут пĕлменлĕхпе кĕрешнĕ.

— Мĕнле кĕрешнĕ?

— Ну, мĕнле калас, ликпункт умĕнђен иртсе çӳренĕ ђух йаланах асăрхаса иртсе кайнă...

Пысăк Упакассинђе прикатă çак меслетсемпе ĕçлерĕ: малтанах хут пĕлменнисене пухрĕ—пухăнмарĕç. Унтан тĕрлĕрен органисатсисенђен претставиттĕлсем пухрĕ — пухăнмарĕç. Йал халăхне пухма тытăнђĕ—çирĕм вăтăр çын пухăнђĕ. Урăх çук. Хут пĕлменнисем патне килĕсене çӳреме тытăнђĕ—ĕç тухмаст.

Çапах та прикатă пухрĕ пухрех йал çыннисене. Ĕç хусканђĕ.

— Рас вĕренмелле—вĕренес пулат. Кайах, арăм. Ик-виç сехетрен ытла вĕренместĕр вĕт! Ађисене унђен хам та пăхкалăп, йăпатса кăларса йарат сар сухаллă, вăтам çын хăй арăмне ликпункта.

— Хĕлле çӳренĕ пулсассăн луђђĕђђĕ те...

— Çав ик-виç сехетшĕн ĕнтĕ, ӳпкелешнĕ пек тăват упăшки.

Кăнтăрла иртсен виçĕ сехет тĕлпелле ликпкунт тулли халăх. Анђах пурте пĕр-пĕринђен вăтана-вăтана саппунĕсемпе тутисене тыта-тыта кĕреççĕ хĕрсем, арăмсем.

— Паçăрах килтĕри есĕр?—пăшăлтатса ыйтаççĕ пĕр-пĕринҫен.

— Анҫах çех,—пăшăлтатсах ответлеççĕ теприсем.

— Айта, хĕрсем, ликпункта!—кантăк витĕр систерет кўршĕ хĕрне сар сухаллă вăтам çынăн арăмĕ.

— Пирĕн паçăрах кайнă!—ответлеççĕ шал йенҫен.

Виçĕ кун ĕçлерĕ ку йалта та прикатă. Виçĕ кун хушшинҫе хут пĕлменнисене ликпункта çавăрса илессине 100 проҫҫăна, ликпункта çўрессине 93 проҫҫăна çитерсе хăварҫĕ.

Мĕн пур тăхăр йалта ĕçлерĕ прикатă. Тăхăр йалта ĕçе ҫĕртсе, йусаса хăварҫĕ.

# Çутăсăр çуртсем.

Лапҫăк, улăм витнĕ, пĕҫĕк пўрт. Пĕртен пĕр ҫўреҫе. Вăл та пулин çутипе çурçĕр йенелле. Никам та ку пўрте пўрт тесе калас çук. Калама та майĕ çук.

Пўрт умĕнҫе çенĕх. Çенĕх мар—пĕр пысăк алăксăр, аслă сарай. Тукай йенҫен, анатран, çил вĕрсен сарайĕнҫи мĕн пур çил хыпаланса кĕрет çав пўрте.

— Мĕн уçса тăран алăка? Кĕр хăвăтрах. Пўрте сивĕтетĕн!—алăка хыпаланмасăр уçса кĕрекен çынсене хăвăртлатат пўрт хуçи.

Урайĕнҫе мĕн пурĕ виçĕ хăма. Ытти вырăнсем—хура çĕр. Пўртне тунă ҫухнех сарнă виçĕ хăмине. Ытти вырăнсене сарман. Мĕншĕн тесен, мунҫалла тунă ку пўрте малтанах. Çавăнпа та лапка айпе кăмака айĕ сарăлмасăрах йулнă ун ҫухнех.

Кантăк йанаххи çинҫе палăрми тусан. Пўрнепе йĕр туса пăхсан, суха пуçпе тислĕк анине сухаланă пек пулса йулат пытанми йĕр.

— Хăйар акмаллаҫҫĕ кунта сан, Кĕркури! —тăрăхласа илеççĕ пўрт хуçинҫен пынă çынсем, тусан çине пăхса

— Вăрлăх çук. Çурмалла ак. Актаратăп!—тĕртсе илет хуçи те хăйĕнҫен тăрăхлакана.

Пўрте тăрăх, хĕвелтухăç йенелле пĕртен пĕр сак, вăрăм хăма. Саваламан пулнă ку хăмана çĕнĕ ҫух. Анҫах, темиçе вунă çул хушшинҫе, темиçе çĕр çын

пыра-пыра сěртěннипе, шăрпăксем çаралнă. Йап-йака та тип-тикĕс сарă сак. Сарă та мар. Ку сакăн тĕсне никам та калама пĕлес çук Тусанпа, пылђăкпа, тĕгĕмпе, пăспа темиçе вунă çул хушши пиçсе сăрланнă, етем тумтирĕпе хитреленсе йакалнă тĕс ку. Кун пек тĕсе нимĕнле хутошнĕк те, нимĕнле маљар та тума пĕлес çук.

— Ма тепрер хăма кĕртсе хумастăн çакăнта, Кĕркури?

— Утса çўреме вырăн йулмасť.

Хĕвеланăç йенне, пĕр кĕтессе хупăрланă, сăрламан потгопкă-кăмака сăрланнă хура тĕгĕмпе. Кашни кирпĕђ хушшинђен пĕђĕккĕн те пулин мăкăрланаť шур тĕгĕм. Çынсен çăварĕнђен тухакан кукăр ђĕлĕм тĕтĕмĕпе пĕр пулса пĕђĕк пўрте тултараť. Уççăн та хулăмăн, авăкăн йавăнаť тĕтĕм пўрт тулли. Сак çинђен анса выртаççĕ урайне, çĕр çине. Урайĕнђе те çăлăнăç çук. Çўлтен анакан тĕтĕмпе çĕр урайĕнђен хăпаракан сывлăш пĕр пулса тытăнаççĕ пăсланма вĕçĕмсĕр. Çумри çынна паллаймăн, сасси паллă пулмасан. Çапла ђăгма çук тĕтĕм вут çуннă вăхăтра. Ахаљ ђух апла мар. Çапах та ытлах уçах мар.

Акă кăмака хыçĕнђен çур аршăн ытларах йахăн ўсиĕ çип-çинсе, çамрăк пиçен хăй çеçкисене кăтартаť. Унпа йунашар тага, тата, татах та тата.

— Ђеђексем лартнă штољ есĕ кăмака хыçне, Кĕркури?

— Çавăн пек пуранатпăр! —тесе пиçенсем çине пăхмасăр, ответлет Кĕркури.

Пиçенсемпе йунашар, кăмакаран тударах, çинçе, вăрăм хуп-хура çиђ-сакăр кăмпа. Çавсемпе пĕрлех, никĕс çинђе пĕр тапгăм мăккăљ—ăвă кăмпи.

— Ну пуйан пурнаť те çав Кĕркури. Ĕлĕкхи улпуггсем пек. Пўртрех унăн курăк, кăмпасем. Тат та тăварла—апат. Тат та йар хурана—йашка, кăмпа йашки. А, а, а, Кĕркури! какайĕ те унтах. Тыт, тыт ђасрах, тыт! Атту тарса кĕрĕ!—кăмпасем хушшине пиçенсем патнелле кайакан пĕр мăн шапа çине кăгартрĕ Мăккăљ Йăвайĕ.

Иккĕн кăна калаçса ларнă çĕре хутшăнђĕç тата икĕ çын. Пўрт тулли халăх пулђĕ çав пĕђĕк пўртре. Çитсе

кĕҫĕ йăкăнат. Урлă-пирлĕ пăхкалат—тăвăр. Унăн валҫҫи вырăн çук.

Хĕвеланăç йенҫеп хуллен вĕрме пуçланă çил хăпартсах пырат хăйĕн хăватне. Акă, ту йенҫи никĕс айĕнҫен курăнса выртакан татăк та шăхăрма пуçларĕ сасăпах. Çил арман çунатти çăтăратни илтĕне пуçларĕ. Çакна кĕтсе пуçтарăннă та ĕнтĕ çак çынсем çак пĕҫĕк, тăвăр, лутака, çутăсăр пӳрте.

— Тухса йаратăн пулҫ арманна, Кĕркури?

— Ҫĕлĕм тивретес те, йарас пулҫ,—кукăр ҫапакла пăхăр ҫĕлĕм çине тапакне тултарма тăҫĕ Кĕркури.

— Тавай-ха тапаккуна! Хут камăн пур? Туртса йарас пĕрре кирĕк камăн та,—тапакпа хут шырама тытăнҫĕ çынсенҫен пĕр çамрăк.

— Хаçат та пулин çукçке çакăнта,—тарăхрĕ çамрăк никамăн та хут çуккине кура.

— Хаçат пулсан, ҫĕлĕм туртма мар-ха. Вуласа пăхасҫĕ пĕр кĕтессине те пулин. Нимĕн çинҫен те илтместĕн хаçатсăр ку лапҫăк пӳртре. Мелнике кĕнĕреппе пĕр пĕрҫĕ тыр илмен, пĕр пус укçа тытман. Темшĕн ĕçлесе пурăнатăп кунта, хам та пĕлместĕп. Хăшĕ укçан илмелле теççĕ, хăшĕсем тыррăн, теприсем çăнăхăн илмелле теççĕ. Ҫорт снайĕт, темĕнле илмелле ĕç укçи. Хаçат пулсан хаçатра çырнă пулĕҫҫĕç хăт ун çинҫен те мĕн те пулин. Тĕнҫере ку арман кăна мар вĕт. Кулҫи çырмаст Çăнăх сутсах илес ха та вăл хаçата.

— Вăл та вăл. Колхоссене, колхоçнĕксене тĕрлĕреп çăмăллăхсем пур теççĕ. Хаçат çине çырнă тет. Анҫах тахçан çырнă, тем тесе çырнă. Пĕлесҫĕ вăт вăл çăмăллăхсене. Акă ăçта кирлĕ вăл хаçат тени. Çавна та тавçарса илеймен вара епĕ ку таранҫен,—тесе хутшăнҫĕ Кĕркури нуши çине тепри.

— Пахҫа-çимĕçсене пасара илсе тухса сутнăшăн налок илмелле мар, тесе калаçса ларҫĕ пĕркунҫе пĕр Кипек аҫи Вăрнарта. Хаҫ мана улма сутнăшăн налок хураççĕ. Хам хаçат çырăнса илетĕп пулсан, арҫапах пигĕрсе илĕттĕм вăл хаçата,—паçăртанпа ҫĕнмесĕр

ларакан пăвăлсем тарăхса сăмаха хуттăнҫĕ, ҫĕлĕмне кĕсйене ҫиксе.

— Арҫара марха епĕ ăна, тӳрех кайса парăттăм апла пулсан совета: „пайăр, пăхăр! Вăн мĕн тесе ҫырнă хаҫат ҫине. Вăт саккун мĕн калат. А, есĕр мĕн, хăтланатăр, матăр кантăрвăррисем?! Халь нимĕнпе те парăнтармастăн.

— Хамăр илеймен, илеймен, ҫакăнта ҫырăнгарса илтермеллеҫ-ха вăл хаҫата колхос правленине. Мĕн, еп хам анҫах штоль кунта арман пӳртĕнҫе. Вăн, халь те улгтăн ларатпăр. Пĕри вулаттăмăр, ыггисем итлетгĕмĕр. Пĕрик сехет хушши ахалех пакăлтатса лартăмăр. Ну, айтăр, тухса йарар арманне! Камăн ҫерет?!—ҫĕлĕме паклатгарса тухса кайрĕ Кĕркури арман пӳртĕнҫен арман кĕлетне.

Ĕҫ пуҫланҫĕ. Пĕр сасăсăр ларса йулҫĕ лаптăк, улăм витнĕ, пĕртен пĕр пĕҫĕк ҫӳреҫеллĕ, пĕҫĕк пӳрт. Арман мелникки—Калмăк Кĕркури пурăнат ҫак пӳргре. Арман мелниккине, армана пынă ҫынсене кĕрсе лармалли пӳрт ку. Анҫах ку пӳрт пĕҫҫен пĕр тăван мар, пурге пĕр тăван вĕсем арман пӳрҫĕсем—ҫутăсăр ҫуртсем... Ҫутă ыйтаҫҫĕ.

## Уҫланкăри ҫуртсем.

Вăрнарпа Выльăх-ҫĕрлĕх технĕккăмĕ хушшинҫе, линирен кăнтăр йенелле, вăрман варринҫе пĕр пысăк уҫланкă. Ҫак уҫланка хĕлĕпех турттарҫĕҫ тĕрлĕрен йăвăҫсем.

— Ҫĕнĕ совхос пулат тет,—калаҫаҫҫĕҫ иртен-ҫӳрен Кушлавăш йенҫисем.

— Ҫу-ук. Шкул пулат тет,—тесе хушатҫĕҫ теприсем. Темĕн пулат ку уҫланкăра? Сасартăк пĕлме ҫук. Йăвăҫ турттаракансем кăна пĕлеҫҫĕ мĕн пулассине. Мĕншĕн тесен, вĕсем ҫав йăвăҫсене турттарма токăвăр тунă. Токăвăрта уҫҫăн та лайăх кăтартнă ун ҫинҫен.

Ҫурхи хĕвел хĕртни те шătăртатса йухтарат куҫҫулне сивĕ йур. Уҫланкăра темĕн ҫӳллĕш купаланса выртакан хулăм йур кунган кунах ҫӳхелет вăрахăн. Пуртă, пăҫăкă сасси йантăрат ир пуҫланса каҫҫенех ку вырăнта. Йан та йан кайат вăрмана ĕҫ йуррин йантравĕ. Хăшĕпĕри

шăхăрат шăл витĕр. Тепри ўсĕрет хĕмленсе. Çавăнтах катаран ђĕнеççĕ пĕр пĕрне йатпала. „Хăнкăр-ханкăр“!— çын вăйĕпе йăванаççĕ пĕренесем. Ĕç сассипе çĕмĕрлет уçланкă.

Акă виç-тăват вырăнта купаланаççĕ уçланкăра çĕнĕрен çуртсем. Пысăк та илемлĕ пулмалла вĕсем...

— Выђăхсем усрамалли витесем пулаççĕ тет çав пысăккисем,—тĕллеççĕ иртен-çўренсем хĕвелтухăç йенђи мăнă çурт çине кăтартса.

— Пĕђĕкреххисем, çавсем, выђăх пăхакансен хваттерĕсем пулаççĕ пулмалла еппин,—илемлĕ купаланса хăпаракан çуртсем çине кăтартаççĕ теприсем.

— Ай, выђăхсем пăхма килме çав кунта. Хам ваљђи йалта çурт та лартса аппаланмăттăмђĕ,—савăнса халаплат ашшĕнђен уйăрăлса тухма хатĕрленекен Мĕлĕш Шăнкăрђ Симунĕ.

Кирек йепле пулсан та, хаљ ĕнтĕ витĕр пĕлеççĕ: çак уçланкăра выђăхсен çурђĕ пулат.

— Ĕлĕкех „Лаша çырми“ хăртни тенĕ те ку хăртна...— вырăн йатне аса илсе мĕн пулассине ĕнентереççĕ хăйсене хăйсем хăшĕпĕрисем.

— Калаттăмђђĕ вĕт; кунта совхос пулат тесе,—хĕл варĕнђе „кунта совхос пулат тет“ тенĕ çын мухтанат йулташĕсен куç умĕнђе хăй малтанах „пĕлнипе“.

Çуртсем купаланнăçем купаланса пыраççĕ. Акă икĕ çуртне туса çитерђĕç. Картлашкаласа, хитрелетсе витрĕç çийĕсене ђуспала. Питĕ те илемлĕ пулђĕç ку икĕ çурт. Çўллĕ. Кантăксем пысăк. Çутă.

Ђылайђђен пĕр вырăнта ларнă Санарпуçсем тăрса утрĕç Кушлавăш йенђисемпе Вăрнар йенелле.

Сăмахран сăмах, халлапран халлап. Çул тăршшипех пакăлтатса пыраççĕ ик йенђи çынсем пĕр пулса.

— Лаша тухтăрĕ ваљђи пулаççĕ вăл çуртсем,—тесе пĕлтереççĕ Кушлавăш йенђисене Санарпуçсем.

Вăрнар таврашĕнђисем, Хапăссем, Санарпуçсем тахçанах пĕлеççĕ çĕнĕ çуртсем кам ваљђи пулнине. Кушлавăш йенђисем кăна йулнă кайарах. Анђах унталли халăх та пĕлсе çитрĕ хаљ пĕтĕмпех:

— Лаша тухтăрĕ ваҁҁи темеҫҫĕ и ҫав „Лаша ҫырми“ хăртнинҁе ҫĕнĕрен тăвакан ҫуртсем?

— Ҫапла теҫҫĕ ҫке ара.

— Ай-ай, катмар та вара.

— Тухтăр наҁар ҫуртпа ан пурăнгăри...

— Хăйне ваҁҁийех мар пуҁ?

— Ҫук пуҁ

Ҫĕнĕ ҫуртсем ҫинҁен тĕрлĕрен сăмахсем- ҫӳрени „Лаша“ тухтăр хăлхине те, районги ыгти уҁрешгенисемпе оркanисатсисен пуҫлăхĕсен хăлхисене те пыра-пыра кĕреҫҫĕ.

Ăнлантармалла пулҁĕ ку ҫуртсем ҫинҁен пĕтĕм район ĕҫхалăхне.

Йалсовет претҫегаттĕлĕсен пĕтĕм районри канашлăвĕнҁе уйрăм ыйту лартса токлат туса паҁĕ „лаша“ тухтăрĕ А. П. Антрейĕв.

Саланҁĕҫ йалсовет претҫегаттĕлĕсем йалсене. Ăнлантарҁĕҫ хăшпĕрисем тухтăр сăмахне. Хăшĕсем манса кайрĕҫ киле ҫитиҁҁен, ҫула майлĕ хуннĕсем патне кĕнипе.

Кирек йепле пулсан та, кирек йепле ĕҫре те тӳнтерле авăртмасăр иртмеҫҫĕ вара пирĕн ĕҫсем.

— Вăрнарти выҁăх тухтăрĕ ĕнесене пухаť тет хăй патне.

— Сысна ҫӳрисене амаҁпа кăларса илет тет... Ҫăмартисене.

— Ват лашасене пусмалла тет ҫавăнта...

Йалта ҫак сăмахсене саракансем пурах ҫав пĕрик-виҫшер ҫын. Ҫак сăмахсене пĕтерес тĕлĕшпе йалти оркanисатсисен ҫине тăрса ĕҫлеме лекрĕ.

„...Выҁăхсене пĕтермелли ҫуртсем мар вĕсем. Вĕсем выҁăхсене тĕрлĕрен ҁир-ҁĕрсенҁен сыватмалли пуҁнитса пулаť...“ токлатсем тăва-тăва иртерҁĕҫ ҁылай йалсенҁе.

— Ĕлĕк унсăрăнах пурăннă. Пĕтереҫҫĕ ҫав вăрмансене ахалех!—хуйхăрса илеҫҫĕ ваťăсем.

— Кирлĕ йапала, мухтавлă ĕҫ,—хĕпĕртеҫҫĕ вăтамсемпе ҫамрáксем.

Нумайах та тăмаст, çак çуртсенђен пĕрин тăрринђе хитре саспаллисемпе **„Вăрнарти выђăх ђĕрлĕх поликлиникки“** тесе çырнă илемлĕ вывĕскă курăнат. Çакăн пек ђаплă уђрештени пулаççĕ нумай калаçтарнă Вăрнар вăрманĕнђи уçланкăри çĕнĕ çуртсем.

# Çамрăк хирурк.

Пĕр çиђ-сакăр çул ĕлĕкрenne паллатăп епĕ ку тухтăра. Ђи малтанах епĕ унпала Йетĕрнери паллă тухтăр—Константин Ваççилђ Волккăв патĕнђе паллашрăм. Вăл вăхăтра унта вăл хирурки ĕçĕпе практĕкре ĕçлетђĕ. Çамрăк, университетран анђах вĕренсе тухнăскерђĕ вăл.

— Ђăвашсем хушшинђе хирурксем питĕ те сахал. Çуках тесе каламалла вĕсене. Çавăнпа та хирурки йенĕпе кайас тетĕп-ха. Константин Ваççилђ лайăх вĕрентет. Пĕр икĕ çул унпала ĕçлесен хамран лайăх хирурк пулассах шанатăп,—хăй çине çирĕппĕн шанђăк хурса калаçса ларђĕ манпала куç пуљнитсинђе прийом пуçланиђђен.

Унтанпала кăçалђђен лайăххăн курнăçса калаçман вăл тухтăрпа. Кăçал курнăçса калаçма тĕл тиврĕ çу кунĕсенђе.

— Мухтав вăл тухтăра. Тава тивĕçлĕ тухтăр вăл. Ни çийейместĕм, ни ĕçейместĕм, вырăн çинђен тăраймастăп. „Çавăнти çынна сыватнă теççĕ; çавăнти çынăнне пыршине татса сыватнă. Есĕ ма кайса пăхмастăн ара? кайса пăх çав тухтăр патне“—тесе йăлăнђĕ хамăр йал уђитли. Çапла хăй мĕнле сывални çинђен йумахласа ларат Йĕпреç ваксал çуртĕнђе манпалла пĕр вăтам кĕлеткеллĕ çамрăк çын.

— Çакăн тăршшĕ касса кăларнă ман пыршлăха. Ернерен тăрса çӱрекен те пултăм,—хăй аллинђи хунав туйапа виçсе кăтартат мана çамрăк çын.

— Ăçти тухтăр вара вăл?

— Хамăр патăрти, Шуруг пуљнитсинђи. Хветĕр Ваççилђ Коловљов, тесе ђĕнеççĕ тухтăрне,—ăнлантарса пађĕ мана питĕ кăмăллă, тухтăра ђăн-ђăпах тава хурса.

— Кăмăллă çын,—хушса хуђĕ каллех.

Тепĕр кунне как рас ман Шурут йалне çитмелле пулђĕ. Курнăçса калаçмалла пулђĕ Коловљов йулташпа.

Çурçĕр иртни пĕр сехет. Тĕттĕм. Куçран ђиксен курăнмаст нимĕн те. Ђĕресрен йарат çав çăмăр. Йалтăрт та йалтăрт çисĕм çиçни кăна çутатат пĕр саманта умра мĕн пурне. Унтан каллех курăнмаст нимĕн те.

Лăп çак çанталăкпа çитсе тăтăмăр пĕр çӳлĕ çурт умне. Мĕскĕнĕн çутатат çӳлти хутри вăтам ђӳређе витĕр краççын лампи.

— Ăçта çитрĕмĕр?—ун йенне çавăрăнса ыйтрăм хампала ларса пыракан акроном йулташран.

— Шурут пуљнитси пулас ку.

— Тавай кĕретпĕр?

— Кĕретпĕр!—килĕшрĕ акроном. Анђах сăлгав тупса уттарђĕ малалла. Епĕ йултăм. Тӳсейми шăнтăм сивĕ çăмăрпа. Кĕрес килет васкарах ăшă пӳлĕме. Анђах— йут çын.

— Кам унта?—алăка епĕ шакканине илтсе ђӳређе витĕр ыйтрĕ пĕр çын.

— Тухтăр кирлĕђђĕ!

Тепĕр пилĕк минутран наккиткă тăхăннă вăгам çын тухса тăђĕ ман ума.

— А, а-а-а! Йала каймалла пуљ, тесе, тумлансах тухрăм вара ĕпĕ. Кĕрĕр,—ăшă кăмăлпа ђĕнсе кӳртрĕ мана Коловљов йулташ паллană пек пулса.

Калаçма, ĕç çинђен каласа пама йуратакан çын Коловљов йулташ.

— Константин Ваççилђ патĕнђе ĕçленĕрен вара ђылай вырансенђе ĕçлерĕм ĕнтĕ. Опуххова пуљнитсинђе, Сывлăх комиссариатĕнђе, Хĕрлĕ çарта, Уравăш пуљнитсинђе, хаљ кунта ĕçлетĕп. Кăçал хирурки ĕçпе çирĕплетме Хусана кайса вĕрентĕм-ха тата. Унта, профессăр Вишневски йертсе пынипе, виçĕ пысăк опператсийех турăм. Питĕ ăнăçлă иртрĕç.

— Анђах, çавах та пулин, вăгамăн илсен, хам ĕçе çителĕклĕ пĕлетĕп, тесе те шанма пултаратăп хам çине. Ку таранђђен хам тĕллĕн мĕн пурĕ 203 опператси ту-

рăм. Вĕсенҫен 21 опператси питĕ те йăвăррисем вара. Ун пек опператсисене тума пур хирурк та килĕшмест те ĕнтĕ. Хăрамасăр тытăнтăм—турăм. Хамран хам тĕлĕнетĕп хаљ те. Ҫав 203 опператсирен вилекенни пĕрре те пулман. Снаҫҫăт, епĕ опператси тунисенҫен ҫмертнăст ҫур проҫҫăн та ҫук. Ҫавăнпа та мана ку тавраҫи халăх: „Покровски лекех тесе шутлаҫҫĕ",—темĕн шырама тытăнат хутсем хушшинҫе ҫак сăмахсемпе. (Покровски тухтăр Коловљов йулташран малтан ĕҫлесе пурăннă Шурут пуљнитсинҫе. Вăл питĕ авториттетлă тухтăр. Ăна хаљ те унти ĕҫхалăхĕ тав туса асăнат. Хаљ вăл Иĕпреҫре ĕҫлет.

„...Мухтав, пысăк тав сана, Хветĕр Ваҫҫилиҫ. Турă пулсан—ҫурта лартăттăм сана. Урăх нимĕн каласа та тав тума пĕлейместĕп ĕнтĕ сахал вĕреннĕ ҫын епĕ. Есĕ сыватман пулсан тахҫанах ҫĕр айĕнҫеҫҫĕ епĕ. Ех пулаҫҫĕ ҫав мăнтарăн вĕреннĕ ҫынĕсем..."

— Ырă ĕҫсемшĕн манмаст мана ĕҫхалăхĕ. Ҫĕнйал ҫынни ку—Иван Фетăрăв. Вилнĕ ҫынна илсе килнĕ пек илсе килсе пăрахрĕҫ ман пата. Калаҫаймаст те хăй. Вăйĕ пĕтнĕ. „Хут вилем, хут ҫĕрĕлем—опператси ту"—тархасласа йăлăнҫĕ аран-аран ҫăварне уҫса пуљнитсана килсен. Опператси турăм. Мăн пыршине касса кăлартăм пĕр ҫур шит тăршшĕ. Ернерен сывалса та тухрĕ. Ҫавăнтан вара Шăнкăртам районĕнҫен питĕ нумай килме тытăнҫĕҫ. Ĕнер кăна пĕр тутар аҫи сывалса тухса кайрĕ вар аннипе опператси тунă хыҫĕнҫен,—хăй валаса панă ҫырăва каллех паҫăрхи вырăна хуҫĕ вăраххăн, пĕр васкамасăр.

„...Мухтатăп сана, Хветĕр Ваҫҫилљ. Ырлатăп ĕҫўсене. Ырлăх сунатăп малашнехишĕн. Покровскипе танлаштараҫҫĕ сан пĕлĕвĕсене. Молотетс! Анҫах, тата та тепĕр ҫул ĕҫлемеллеҫҫĕ ман патăмра. Вара..." Ку—Ҫăваш респуплĕкĕнҫи паллă хирурк Константин Ваҫҫилҫ Волккăв ҫырăвĕ.

— Таҫтан пĕлнĕ епĕ мĕнле ĕҫленине? Хăйпеле Хĕрлĕ ҫартан тавăраннăранпа та курса калаҫман,—Волккăв

йулташ çырунс вуласа măн кăмăллăн, ăш куçпала пăхса илђĕ ман çине.

Коловљов йулташ хирурк тĕлĕшĕне кăна мар, профилактĕк йенĕпе те тăрăшса ĕçлет.

— Кăçал хамăр пуљнитса укçипе кĕске курс туса иртертĕмĕр. Вăл курсра çуракинђе васкавлă пулăшу паракансене вĕрентсе кăлартăмăр. Кăçалхи çуракинђе çак пуљнитса районне кĕрекен йалсемпе колхоссенђе пуринђе те васкавлă пулăшу паракан çестрасем ĕçлеиĕ. Çав çестрасемех тырпул пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра та ĕçлемелле. Вĕсен пĕлĕвĕсене малалла тата хăпартса пыма шутлатпăр. Вĕсенђен профилактĕк ĕçне, васкавлă пулăшу парас ĕçне витĕр пĕлсе тăракан çынсем тума шутласа хунă, тăватпăр та,—хĕпĕртесе каласа парат Коловљов йулташ йалсенђи ĕçсем çинђен.

Шурут пуљнитси вăл Йĕпреç районĕн кăнгăрпа хĕвелтухăç ђиккинђе ларат. Ку районра трахом ытларах сарăлнă. Вырăнăн-вырăнăн хăшпĕр йалсенђе трахом 70—80 прођђăн çитет, çавăнпа та трахомпа кĕрешес ĕçе те малти ретре хурса кĕрешме тивет ку районта.

— Виçĕмçул трахом 60 прођђăн тупăннă йала кăçал тепĕр хут сăнаса пăхрăмăр. Кăçал вара çав йалта трахом 35 прођђăна йулађђен ђакнă. Тепĕр çултан вăл йалтан трахома пуçĕпех хăваласа кăларса йарасса шанатпăр. Унта хаљ спетсиаљчи трахом çестри ĕçлет. Ун пек çестрасем пирĕн пĕр йалта кăна мар, пуљнитса районне кĕрекен йалсенђе вунвиçĕ йалта ĕçлеççĕ. Так што... (ђаранса тăрат Коловљов йулташ) тепĕр икĕ çултан пĕр йалтан кăна мар, пĕтĕм районтан хăваласа кăларса йарас тетпĕр трахома. Кайтăр вăл çавăн патне,—сасăпах кулса йарат Коловљов тухтăр хĕпĕртенипе.—Ийулĕн 1-мĕшĕђђен епĕр районри йалсенђе трахома сăнас пирки пурне те тĕрĕслесе тухса пĕтертĕмĕр. Ку тĕлĕшпе Çеркейĕв враљ та питĕ тăрăшса ĕçлерĕ вара,—кĕртсе хурат сăмахне çавăнтах.

Шурут пуљнитсин ĕçлекенсем ваљђи хваттерсем, выљăх-ђĕрлĕх усрамалли çуртсем пур. Ђирлисене выртмалли çуртсем, кроват - пукансем те çителĕклĕ.

Ваннăсем, емел таврашсем опператси тумалли хатĕрсем те аптрамалла мар. Анҧах Коловљов йулташ вăл пуљнитсана татах та сарасшăн тăрăшат.

— Кăçалтан пуçласа тепĕр корпус, трахомлисем ваљљи тăвас, тесе шутлатăп. Хаљ тăваканнисем вĕсем мунҧапа праҧнăй пулаççĕ,—тесе кăтартат çĕнĕрен тунă çуртсем çине.

Çакăн пек пирĕн çамрăк хирурк—Коловљов йулташ.

# Йут елемент.

Тухховнăй аккатеми. Теҧук. Тийаккăн. Пуп. Револљутси...

Советский рапотнĕк. Активис. Вулĕçтăвком. Вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ. Вĕçĕмсĕр растрат. Растрел...

Колхос. Колхос правлени. Правлени претçетаттĕлĕ. Савхос. Активис. Шулĕк. Вĕçĕмсĕр растрат. Тĕрме...

Çак паллăсем палăрса тăраççĕ Никкантăр Тенисҧ Тениссăв пурнăçĕнҧе.

Йал кулакĕсем ҧухăнсен ĕнсисем çинҧе каҧака тирĕ сĕвнĕ вăхăтра, ҧухăнсен пиҧĕсем çинҧе уретнĕксем «Мускав кăтартнă» кунсенҧе, ҧиркӳ тарçисем «йулашкине пире пар та, ху ыйткалама кай, турă суйласа лартнă турă ҧунĕсене хисепле» тесе вĕрентнĕ вăхăтра—Никантăр Тенисҧ тухховнăй аккатеминҧе вĕренет. Хăй те çавсем пек ăнлантаракан ăстаçă пулма хатĕрленет. Хатĕрленет кăна мар. Хатĕрленсе çитет. Никантăр Тенисҧ—теҧук. Никантăр Тенисҧ—тийаккăн. Йулашкинҧен—пуп. Вăт—шыра та туп!

Вăрăм, таҧка сăмсине çĕрелле усса, таҧка хырăмне малалла мăкăртса кăна çӳрет. Никантăр Тенисҧ—Его Высокоблагословение отец Тениссăв. Шуткă мар, прăт. Ан пырса сĕртĕн.

— Ан перĕн ман çумма! Килӳ-çурту ман тумтир хакĕ тăмаст—сирсе кăна йарат мăнтăр аллисемпе пирĕн пеккисене таса атте Тениссăв.

Револљутси. Самăй елхерейе хатĕрленнĕ вăхăтра çитсе пусрĕ револљутси Никантăр Тенисăҧа. Вăт тепе рас! Мĕн тăвас?

Совет влаçне пĕтермешкĕн кунне виçшер те кĕрекĕре кĕл турĕ турра ђиркĕве Тениссăв. Çук. Ĕç тухмасŤ. Совет влаçĕ парăнмасŤ.

— Кирек те йепле влаç та турăран қилет. Совет влаçĕ—турă панă влаç. Хура халăх, тăвансем, совет влаçне пирĕн ђăн влаç ырăнне йышăнса, ăна пăхăнса тăмалла!—ђиркӳри халăха „ăнлантаратŤ" Никантăр Тенисђ пĕтĕм ђĕререн.

— Çав, претçетаттĕл пеккине пуçтарса хумалла вара пирĕн хамăр йалтан. Унпала ĕç тухмасŤ. Вăн, расни контрипутсисем пуçтарма тытăнђĕç. Патша вăхăтĕнђе хăçан апла пухни пулнă, шутлăрха, тăвансем?!—хăй патĕнђе ĕçкĕ туса çавăратŤ йал куштанĕсене.

Йал куштанĕсем çавăрăнаççĕ. Анђах, анђах совет влаçĕ çавăрăнмасŤ. Вăл сехетрен сехете, кунран куна çирĕпленсе, хăватланса пыратŤ.

Мĕн тăвас?! Çӳç касас. Шĕлепке ырăнне—картус тăхăнас. Вăрăм тумтиртен—пиншакпа шалавар. КалаçаŤ илемлĕ. Совет майлă. Пулас советский рапотнĕк.

Ĕнтĕ Никантăр Тенисђ—вăрăм çилхеллĕ, лапсăркка кĕлеткеллĕ, кăштăрка пуп мар. Никантăр Тенисђ—советски рапотнĕк. Вăл уђитлĕ. Вăл—актив. Пĕтĕмпех совет çынни Никантăр Тенисђ. Пленăмсенђе, пухусенђе кастаратŤ кăна активис.

Тĕлĕнмелле ĕçлет Тениссăв. Халăх йуратаŤ. УвашаŤ тăваŤ. Кирек ăçта каймалла—Тениссăв кайаŤ. Мăн ĕçсем тумалла—Тениссăв—Тениссăв тăваŤ.

Ăшă кăмăллă. Çу ђĕлхеллĕ. Пыл халаплă. Мамăк тӳшеклĕ. Питĕ те çемçе.

Активиссене ĕненетпĕр вĕт. Шанатпăр. Тĕрлĕ ырăна лартатпăр.

Никантăр Тенисђ претçетаттĕл. Ике-виçĕ çул ĕлĕкрех: „Михайло-Архангельской церкви с. Кукшум священник Денисов" тесе метрĕксем çине алă пусађђĕ пулсан, халђ йăлтах урăхла. Халђ: „Председатель, Норусовского Волисполкома Денисов" тесе совет уђрештенисен хуђĕсем çине алă пусаŤ. Советски рапотнĕк.

Претçетаттĕл. Каменски, Петров пупсем çине тӳсейми налоксем, тӳлевсем, контрипутсисем хурса тухат.

— Никантăр Тенисҍ! — йăлăнаççĕ лешсем халăх умĕнҍе.

— Никаких!—касса татат ку вĕсене.

Тĕрĕс. Никаких илмеççĕ пупсенҍен. Мĕншĕн тесен „несостоятельные“.

— Хăратрăн çав, Никантăр Тенисҍ!—шăлăнаççĕ пупсем Тениссăва, хăйсем патĕнҍе ырă хăнара.

— Çапла ĕçлемелле халăх умĕнҍе. Пĕлес пулат хаљхи вăхăтра,—мухтат хăй ĕçне Никантăр Тенисҍ.

Вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ. Пĕтĕм вулăс хуçи. Пурлăх, халăх унăн аллинҍе. Кирек йепле ĕçлес килет— ĕçле. Ху хуçа.

„Кирек йепле тăрангар кашкăра, вăл çавах пăхат вăрмана“—çавăн пек йумах пур халăх хушшинҍе. Йумах мар иккен. Ҍăн сăмах вăл.

Никантăр Тенисҍ, ҍиркӳре вăрлама, халăха çаратма вĕреннĕскер, вулĕçтăвкомра га пăрахаймарĕ çав ĕçсене. Вăрларĕ. Çаратрĕ.

Вăрман хăлхаллă, уй куçлă. Сут аллине лекрĕ Никантăр Тенисҍ.

Растрел.

Каппут Никантăр Тенисҍ. Çук. Пĕтрĕ. Тасалҍĕ çĕр çинҍен. Çарагаймаст ĕнтĕ хаљ халăха. Çĕр айĕнҍе выртат карăнса.

Çук çав. Апла мар çав, йулташсем, çĕр айĕнҍе мар çаб. Колхосра вăл, Нурăс колхосĕнҍе. Ретовой ҍлента мар—претçетаттĕл!

Амниçти çăлса хăварнă Никантăр Тенисҍа. Ларкаларĕ пулас пăртакçă тĕрмере. Анҍах, тухрĕ вăхăтсăрах темĕскерле.

Пуç çăлăннă. Тĕрмерен тухнă. Шăват пурнăç малалла. Тĕрлĕрен суту-илӳ, çпеккуљатси. Лайăх пурнакан шутне çитсе çакланҍĕ Тениссăв. Налуксем, çирĕп сатанисем тийене пуçланҍĕç Никкантăр Тенисҍ çинс.

Çиҍĕ çухрăм малта пырат унăн ăспуçĕ.

— Пĕтетпĕр, колхоса кĕмелле,—тапратса йаҕĕ ку пĕрре майрипе апатра.

— Вара ҫакăн пек апатсем тарĕҫ ĕнтĕ сĕтел ҫинҕен,— хуйхăллă тавăрса хуҕĕ Тенисcăва майри.

— Пĕр сысва ҫумне тепĕр сысна хушмалла ĕҫлеме вĕренес пулат. Ниушлĕ пултараймастпăр вара? Халиҕҕен...

— Ах, темле ҫав?

— Пултаратпăр. Ĕҫлеме пĕлмелле.

Ку вăхăт ĕнтĕ Никантăр Тенисҕăн пурнăҫĕнҕи виҫҫĕмĕш тапхăр пулат.

Ҕиркӳ. Вулĕҫтавком. Колхос.

Колхосра. Ăшă кăмăллă, ҫу ҕĕлхеллĕ. Пыл халапла. Мамăк тӳшеклĕ. Пурне те итлет. Пурне те тăват. Маттур колхоҫнĕк. Примерлă Тениссăв.

— Маттур ĕҫлет!

—Хут лайăх пĕлет!

— Примерлă ҫын.

Тениссăвран малтан колхоса кĕнĕ, хăйне майлă ҫынсем сасăларĕҫ колхос пуххинҕе Тениссăвшăн.

Претҫетаттĕл пулса ĕҫлеме тытăнҕĕ ку пухуран вара.

— Кăкшăм колхосне ҫитсăсем панă. Пирĕн ăҫта?— ыйтрĕҫ пĕррехине пухура.

— Лайăх ĕҫлеместĕр тесе памарĕҫ,—пĕтĕм ĕненмелле каларĕ Тениссăв.

„Пултаратпăр, ĕҫлеме пĕлмелле“ тенисене пурнăҫа кĕртсех пырат Тениссăв.

Ҫитсă килет—хăйне илет. Тĕрлĕрен тавар—хăйне мала

— Супăҕсем килнĕ тет!—сасă пухура.

— Ҫăмăрпа ирĕлсе пĕтнĕ!

Ах, мур ҫăмăрĕ! Пирĕн уйра калҕа шăтмаллăх ҫумарĕ. Нурăс ҫинҕе колхос супăҕ ирĕлмелĕх ҫăмăр ҫунă. Вăт тамаша!

— Колхоса кĕрес тетĕп,—пырса йевитлерĕ пĕр ҕухăн претҫетаттĕле.

— Пĕр выҕăху ҫук. Мĕн усси пултăр санран,—пат татрĕ ҕĕререн.

— Мĕн кайса намăса курас. Пурăнкалăпăр-ха,—лăпланҫĕç ытти ҫухăнсем.

Утăсем çĕреççĕ. Сăрапсем шăтаççĕ. Капансем тӳнне. Латти çук колхосра!

— Çавăнта кĕрсе йапăхма!—аллисене сулаççĕ Нурăс çыннисем.

— Унта кĕрсе пĕтеҫҫен, ĕмĕр хам хуçалăхпа пурăнам,—çирĕплетеççĕ теприсем.

— Пултаратпăр,—канашлат апатра Тениссăв майрипе.

Колхос малалла мар,—тытăнҫĕ ҫакма кайалла. Колхосран тухаççĕ.

— Колхосри ҫухăнсене Арханкĕлскине илсе каймалла тет ĕçлеме,—сăмах вĕçтерет йал çине майри.

Колхос йăвашланҫĕ. Анҫах пĕтмерĕ.

Тениссăвсем çакланҫĕç. Çентапĕрĕн 9—10 мĕшĕсенҫе пăхса тухрĕ халăх суҫĕ Тениссăвсен ĕçĕсене.

## „Ухмах Йăван“

Йетĕрне хулинҫе пĕрлешрĕмĕр çак Йăванпа. Пĕрне пĕри куçпа пăхса илнипех туслашрăмăр унпа.

— Хваттере пĕр çĕре лекесҫĕ,—ман çумма пырса сăмах хушрĕ, хампалла пĕрле прийома кĕме пынă, пĕр çамрăк, таса аҫа прийом çурҫĕ умĕнҫе.

Ман хамăр йалсем пур.

— Миçен?

— Вунтăваттăн.

— Апла пулсан сирĕнпех лекесҫĕ. Хамăр йалтан епĕ пĕҫҫенех.

Йышăнтăмăр çак палламан йулташа хамăрпа пĕрле Салантăмăр хваттерсене çывăрма çĕрле.

Майăн 18-мĕшĕ. Каçхине çурĕ хулăм йур. Çанталăк сивĕтрĕ тухма-кĕме çук. Йĕрӳ те, шăл шатăртаттару та пирĕнпе пĕрлех.

— Куна кăна мар-ха, кунтан çĕр хут, пин хут йăвăррине курмалла пулĕ. Ахаљ мар çынсем алăсăрурасăр тавăрăнаççĕ. Пуçа хулхушшине хĕстерсе те тавăрăнмалла пулĕ-ха.

Çак сăмахсемпе пуçласа йађĕ хăйĕн халлапне, сайхах тăрринђе, утă çинђе выртнă çĕрте, пирĕнпе хутшăннă йут ађа.

Сивĕ. Нийепле те çывăрса кайма çук. Кĕске сăхмана пуç çинелле туртса витĕнсен—урасем йулаççĕ йуçланка; урасем çине витсен—пуçсем тăлăхра, шăнат те çамка.

— Çывăратри?—тесе ыйтат йут ађа

Хăшĕсем ђĕнеççĕ—çывăрман. Теприсем ђĕнмеççĕ—çывăрнă. Татти-сыпписĕр çапат халлапа палламан ађа. Авалтан илсе халђхине çитиђђен паллаштарђĕ салтак пурнăçĕпе.

— Çаксене аса илсен, нимĕн тусан та кайассăм килмест вара манăн салтака,—хăйĕн пиђђĕшне салтакра туйапа ăшалантарнине каласа, тата шаларах кĕрсе выртрĕ утă ăшнелле.

Хамăр йалсем епĕр вунтăваттăн. Палламан ађапа вунпиллĕкĕн. Ирхине тăрсан пурте «ђирлерĕмĕр». «Каймастпăр» тетпĕр салтака.

Прийом пуçланђĕ. Прийом çурђĕ умĕнђе тĕксе сирĕлмест халăх. Темиçе вулăсран. Палламан ађа уйăрăлђĕ пирĕнтен. Çухатрăмăр.

— Çавăнта пĕр ухмах пур!

-- Темĕн те туса кăтартат!

— Айтăр, кайса куратпăр!

Тĕлĕнсе, хытсах кайрăмăр хамăр йалсем. «Ухмах» пирĕнпе утă çинђе пĕрле çывăрнă ађа иккен.

-- Мĕн пулђĕ сана?—васкаса çывăхартăм вăл ларнă çĕрелле.

—Хам пĕлетĕп!—вăрттăн куçа хупса илђĕ мана хирĕç.

Прийома пирĕнтен малтан кĕмелле пулђĕ Йурласа кĕђĕ прийом çуртне. Пур халăх кулса йулђĕ ку çынтан.

— Ан йăсла!

— Ан йăсла мар, Йăван йатлă!—тавлашува кĕрсе кайрĕ салтакпа пирĕн палламан ађа.

«Ку ухмаха та илсен салтака»,—тĕлĕнсе йулђĕç ăна пăртак та пĕлмен çамрăк ађасем.

Прийом пӳртĕнҫен тухмарĕ ҫавăрăнса кайалла. «Уна та илҫĕç»—тèлĕнҫĕç ҫынсем тепĕр хут.

Каçпала ҫывăха епĕр те кĕтĕмĕр прийома. Пĕри йулҫĕ хăтăлса. Карăмăр епĕр—хамăр йалсем вунвиççĕн

Прийомнăй килкартинҫе темĕн ҫухлĕ шырарăм паллашнă аҫана. Анҫах курăнмарĕ ниçта та Çухалнă. Çук.

— Ёнерхи ухмах писсăрăнне шенелне тăхăнса тухса тарнă Вăт шулĕк!—терĕç тепĕр кун ирхине тĕрĕсленĕ ҫух.

Салтак пулса тухса кайнă иккен вăл прийомнăй хапхинҫен. Салтак-тăк салтак Картуспа. Шенелпе. Никам та ҫарман.

* * *

Питĕ те киревсĕрҫҫĕ пирĕн ротнăй кăмантир Пĕлсен те хĕнеҫҫĕ. Пĕлмесен те ĕнтетҫĕ. Ирхине, пуринҫен малтан пирĕн рот тухаҫҫĕ вăййа. Кайа, кайа та йулаттăмăр епĕрех. Питĕ те ĕшентеретҫĕ.

— Кай кĕнҫелерине. Ротнăй ҫĕнет!—пырса вăратрĕ мана кăнтăрлахи ăйхăран хамăн уҫитлĕ

Тăрса ҫупрăм кĕнҫелери патнелле

— Писçхине ҫых, тăмпай!—ҫарса ремене ҫыхтарҫĕ уҫитлĕ.

Кĕнҫелер тулли офитсерсем. Йут ротсенҫен те пынă курмашкăн. Йетĕрнере паллашнă йулташ тăрат вĕсен варринҫе.

— Женат?—ыйтат ротнăй.

— Шенат!—ответлет йулташ.

— Ребята есть?

— Репет йеç!

— Сколько?

— Сколҫккă!

— Пять?

— Пет!

— Десять?

— Теçĕт!

Мĕн ыйтнă—ҫавăнпа тавăрат йулташ. Мăҫ! хупса илет сулахай куçне ман çине. Сисрĕмĕр пĕрпĕрне. Ăнлантăмăр мĕн кирлине.

— Калаç-ха çак ухмахпа. Авланнă-и вăл? Ађисем пури?—хушрĕ мана ротнăй.

— Тытса пăђăртарĕç мана. Йулашки шалунпа илсе килђĕç,— тесе пуçларĕ йулташ манпа калаçма.

— Мĕн «шалун» асăнат вăл?—ыйгрĕ манран ротнăй.

— Ађасем пур. Питĕ те аташаççĕ (шалуны) тет вăл,— ответлерĕм ротнăйа.

— Дурак, а ребят имеет! —хĕрхеннĕ пек пулђĕ йулташа ротнăй.

«Ухмах Йăван» тесе ђĕнетђĕç ку йулташа хамăр ротра роттипех.

Ман çумма выртарђĕç ку «Ухмах Йăвана». Пулăшма, вĕрентме хушрĕç мана ăна вăй çитнĕ таран.

Питĕ туслă пурăнса кайрăмăр епĕр ку йулташпа. Пирĕн ђăваш ађисем те лайăх пĕлетђĕç ăна. Вырăссем те пĕлетђĕç. Анђах, пирĕн ђухлех мар.

Такамшăн та ухмахăн туйăнађђĕ ку Йăван. Анђах, пурнĕ те ђакалатђĕ вăл айран.

Пĕр ирхине ротăн роттипех атăсем çутă мар пулнă. Тепĕр хут тасаттарђĕç. Пирĕн Йăван тухаймарĕ пирĕнпе пĕрле.

— Иванов ăçта?—пăхса илђĕ ротнăй.

— Кунта!—мĕшĕлтетсе тухат касăрмаран. Аттисене: сылтăмине сулахайа, сулахайне сылтăма тăхăннă. Етем вараланђăкки çине пуснă пĕр урипе. Пĕтĕм вараланђăк. Хăй винтовккă йатнă, хулпуççи çине хуман.

— Ђиксе пăрахĕ ку ухмах,—пăшăлтатса илђĕ ротнăй пирĕн свотнăй комантирпеле. Унтан сасартăк:

— На плеђђоо!—командă пађĕ Йăвана.

Шађ! пырса çупрĕ питĕнђен Йăвана ротнăй комантир.

Лађ! пăрахрĕ Йăван винтовккăна ротнăй çиелле.

Шакăрах! анђĕ ротнăйăн сăмсаран вĕри йун.

Çакăнтан кайран винтовккă памарĕç Йăван аллине. Тивмерĕ ăна урăх ротнăйăн çупки те.

— Хăтăлтăм аранах,—хĕпĕртерĕ Йăван çаксем хыçĕнђен

Анҫах винтовккă ҫĕклетсе тăрататҫĕҫ кашни апатрах. Пĕрре Йăвана винтовккă, виҫĕ ҫăкăр, ҫулсем ҫиксе, кăларса тăратнă парак айккине. Аҫасем те курнă вăл мĕнле тăнине. Хам та курнă. Лайăх тăратҫĕ.

— Ухмах Йăвана тытса кайнă. Вăл «пот винтовккă» тăратнă ҫăкăрне сутнă.

— Ҫулпа персе ротнăй йăттине уксах тунă.

— Персе вĕлермелле тет ăна.

Кĕрлеҫҫĕ кăнтăрлахи ăйхăран вăраннă салтаксем. Хăшĕ ахăраҫҫĕ. Пĕрисем кулҫанаҫҫĕ. Теприсем макăраҫҫĕ.

Йăван хăй ҫумне ҫакса тăратнă ҫăкăрĕсене пĕр карҫăка виҫĕ паҫкă тапакла сутнă пулнă. Ҫулĕпе ротнăй йăттине персе уксахлатнă. Ҫакăнпа ăна епĕр тăриҫҫен тытса кайнă. Епĕр вăраннă ҫĕре Йăван ҫук.

Рот лăпланҫĕ пĕтĕмпех. Йăван ҫинҫен асăнаҫҫĕ. Вĕреннĕ ăна пĕтĕмпех. „Ухмах та пулсан" выҫататҫĕ, култаратҫĕ, Пĕтĕм савăк паратҫĕ.

— Йăван килҫĕ!

— Йăван!

Хăйĕн тăванне кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илҫĕҫ салтаксем Йăвана. Йăван виҫĕ талăкран тавăрăнҫĕ.

— Татах хăтăлаймарăм ку шуйттан слушпинҫен. Вăрҫа кайсан хамăр тăванпа хирĕҫ вăрҫас пулат вĕт. Перес пулат ăна. Вĕлерес пулат. Мĕн тухат пире? Ех, пĕлсе ҫитеймен хаҫ епĕр!..—ҫылайҫҫен пăшăлтатса калаҫса выртрĕ Йăван манпала тавăрăннă каҫхине.

Ҫăвашсем епĕр йаланах уйрăм пухăнса лараттăмăр. Йаланах Йăван вăрҫă ҫинҫен, ун тискерлĕхĕ ҫинҫен каласа паратҫĕ. Ҫăваш аҫисем ăна йуратакан, пăхăнакан пулҫĕҫ. Ҫакна вырăссем те сисрĕҫ.

Тепĕр куннех priҫак паҫĕҫ пире. Priҫак ҫирĕмĕр.

— А, ты, оҫҫол!—пырса тăҫĕ манпала йунашар тăракан Йăван умне полк кăмантирĕ.

Епĕ те, никам та асăрхайман: Йăван картусне кайалла ҫавăрса лартнă пулнă.

— Почему так?—тесе ыйтрĕ комантир.

— Жарко!—таса вырăс ҫĕлхипе тавăрса паҫĕ Йăван.

— Он дур... «Вăл ухмах» тесе каласшăнђĕ свотнăй кăмантир. Анђах «Ухмах Йăван» вырăс ђĕлхипе «жарко» тенине илтсен, çиçĕмле кайса тăђĕ хăй вырăнне.

— Воеват не хочешь—хăтăрма тăђĕ комантир.

— Так точно, не хочу!—ответлерĕ Йăван пурте илтмелле.

Нимĕн те ђĕнмерĕ комантир. Уттарђĕ малалла. Йунаса хăварђĕ кăна нухайпа Йăвана.

Паратран тавăрăнсанах Йăвана икĕ салтак тăђĕç икĕ йенне. Вырăн айĕнђен тупрĕç темĕнле кĕнеке. Йăвана арĕслерĕç. Йăвана ăсатрĕç. Йăван уйăрăлђĕ пирĕнтен. Йăван çук. Кулђантăмăр Йăваншăн. Анђах нимĕн тума çук.

«Ухмах Йăван» ухмах пулман Вăл—уђитлĕ пулнă. Вĕреннĕ çын. Кунти студентсемпе çыхăну тытса салтаксем хушшине кĕнекесем сарса пурăннă,—терĕç Йăван çинђен хăйне арĕслесен.

Ку ĕç пулђĕ 1916-мĕш çулта, çу варринђе, патша вăрçи вăхăтĕнђе. Уйăрђĕç мана та çав вăхăтра хам йулташсенђен урăх хулана, питĕ инçе.

Йăван каймасђĕ манăн асăмран. Сайра кун иртетђĕ ăна асăнмасăр. Ашрах тăратђĕ. Умрах выђатђĕ.

* * *

Виçĕ çултан куртăм Йăвана.Палларăм сасартăк епĕ ăна.

— Патталио-о-он, çмир-рно-о о!—комантă пулђĕ вăл пырсан.

—Волђнă, мой патталион!—терĕ пире старав туса Йăван.

Ун ђухне ăна „Йăван“ мар; командир Иванов тетђĕç. Хĕрлĕ çарта ун ђинне çав виçепе виçетђĕç.

# Шăлсен пастовкки, тата—хырăм пĕлĕтпе çапăçни.

## Кулђтпоххот йађĕпе.

Хăрушă пурнăç сиксе тухрĕ Кĕркури умне. „Нăттăрр“ тунă сасă илтĕнђĕ çăварта. Пакăлт! кăна сиксе тухрĕ çăвартан асав шăл.

— Тухăр хам хыçран! Неђђĕвă унта пурăнма!— кайалла çавăрăнса тăрса, камантă пађĕ ытти шăлсене.

Нăтăрр-натăр! тытăнђĕç шăлсем çăварта.

Шăкăрт та шăкăрт! тухаççĕ шăлсем çăвартан.

— Вăт, пурăн хаљ ĕнтĕ пĕр шăлсăр çирĕм çулхи старик!—йунарĕ Кĕркурийĕ йулашкинђен тухса пĕр шăлĕ.

— Турă усала систĕр!—хăранипе хĕрес хуђĕ хăй çине Кĕркури.

— Турра асăнма пĕлетĕн! Пире пăхма пĕлмерĕн, сысна кăнтăрли,—пырса сурђĕ Кĕркури çине малтан тухнă асав шăл.

Хыпаласа пăхма тăђĕ хăй умĕнђе саркаланса тăракан асав шăла Кĕркури.

— Ан перĕн хура аллупа!—ђăлт сикрĕ асав шăл.

Сĕлехе йухма тытăнђĕ çавăнтах Кĕркурин çăвартан. Ĕнenмесĕр хыпаласа пăхрĕ аллипе çăварне. Пĕр шăл та йулман. Йап-йака та тип-тикĕс. Йĕрсе йађĕ хурланса Кĕркури.

— Йĕрет. Шел, вĕт, çирĕм çулхи старике... Атăр вырăнсене!—камантă пађĕ асав шăл.

Капăрт! капăрланса пыђĕç шăлсем çăвар умне.

Кулса йађĕ хĕпĕртесе шăл хуçи.

— Çăварĕнђен шăрш кĕрет! Çук, кĕместпĕр. Кайалла, шаком марш!—камантă пађĕ йулташсене асав.

Йăпăрт кăна кайса тăђĕ виç утас катана шăл çарĕ.

Пĕр-пĕринпе пăшăлтатса калаçма тытăнђĕç шăлсем. Сив куçĕсемпе пăхса илеççĕ Кĕркурийĕ хайаррăн. Ыттисенђен уйăрăлђĕ те асав çывхарђĕ каллех Кĕркури çывăхне.

— Çăварна миçе çул ђŭхемен?

— Астумастăп!

— Епĕ те астумастăп!

— Есĕр манран маларах çуралнă. Астăватри: Кĕркури хăçан та пулин ђŭхени çăварне?! ыйтрĕ ытти шăлсенђен асав шăл!

— Çук! Ђŭхемен,—харăсларĕç ыттисем.

Ђылайђђен шухăшларĕ Кĕркури. Анђах астуса илеймерĕ хăçан ђŭхенине çăварне.

— А ă-а-ă, сысна хăраххи, çăвартан шăрш перет! кам пурăнтăр ёнтĕ çавăнта?—лаҕ, сурса хăварҕĕ Кĕркури çăварне асав.

— Манăн та калаçмасăр йулас мар!—ҕăлт-ҕăлт-ҕăлт сиксе пыҕĕ малти шăл.

— Мĕн ҕухлĕ хурлăх кăтартрăн есĕ пире!—урисене саркаласа тăҕĕ Кĕркури умне.

— Мĕн хурлăхĕ?—ҕăтаймарĕ ҕĕнмесĕр Кĕркури.

Мĕнле мĕн хурлăхĕ? Йаланах çийеттĕн ăшă çăкăр. Купаланса йулаҕҕĕ çурри пирĕн çине. Сывлама çукҕĕ вара пире ун хыççăн. Çаплах пĕтертĕн есĕ пирĕн ӳпкене. Çаплах пĕтертĕн пирĕн мунтире. Ăшҕикĕм те хăвăл, тумтирĕм те çук. Кам айăплă ёнтĕ çакăнта?!—ҕăтаймасăр йĕрсе йаҕĕ малти шăл. Хуллен пуçне ҕиксе утрĕ йулташсем çывăхне.

— Улмасем çисе йăпăлкалатса лартатăн пирĕн тумтире. Нихçан аса илмен тасатма. Кам пур сан пек йапăх пурăнакан? Мĕнле шăл тӳссе пурăнтăр санăн çăварăнта? Ех, айван!—капăрланса пыҕĕç Кĕркури çывăхне шăлсем пĕр харăс.

— Тăхтăр-ха. Хам калам!— ҕарҕĕ çавăнтах пĕри. Нихçан та манмастăп çак ĕçе. Какай çирĕ пĕрре Кĕркури. Çамăй пирĕн хушша кĕрсе ларҕĕ пĕр ҕĕрпĕл какай. Ниҕҕево пекҕĕ малтанах. Асăрхамастпăр нимех те. Кансĕрленĕ пек кăна тăват пăртакçă. Пĕр кун пурнатпăр. Икĕ кун. Виçĕ кун. Йур хывнă нӳхреп мар вĕт вăл етем çăварĕ. Шăршлана пуçларĕ хаҕхи пирĕн хушăрти какай. Хăйне те шăршă перет пуҕ-ха. Кăларса ыватĕха ёнтĕ аранах, тесе пурăнатпăр. Кахал çынăн кирек ăçта та çавах çав. Çăварне карнă, харлаттарса çывăрат кăнтăрла сулхăм айĕнҕе çу кунĕнҕе. Нăй-й-й! туса пыҕĕ пĕр шăна. Нумайах та лармарĕ. Каллех кайрĕ. „Ку, туса хăварҕе ёнтĕ ку пирĕн ваҕҕи" терĕмĕр çак йулташпа (хăй çумĕнҕе тăракан йулташĕ çине кăтартат). Ехих, аҕан! Ҕунлă йапала йĕшĕлтете пуçларĕ пирĕн хушăрта. Ех пакăç!—аллине сулҕĕ шăл çавăнтах.

Пуçне усса итлесе ларат Кěркури. Питě те вирлě кастарђě вара хаљ тухса калакан. Ирěксěрех шухăша кайрě Кěркури. Лайăх астăват ку ěçе. Пěлтěр çулла пулнă вара ку истори. Пěђěкçеç хурт туртса кăларнăђђě унăн шăлěсем хушшинђен кěçěн йăмăкě. Тěрěс. Тунма çук.

— Çăварăнтан шăрш кěрет. Çăварна ђўхесе тасатмалла! терě пěрре çавна камсомолěс Михаља.

— Хăвăннинђен ан кěтěр!—тавăрђě силленсе. Ех, телейсěр ђун!—пак пырса перěнђě пěр шăлě Кěркури сăмсинђен.

Шартах сикрě Кěркури.

— Астăватăр пуљ йулташсем? Хамăрах хаљ куратпăр вěт пěр-пěрне хамăр куçпалах! Тумтирěм çěтěк пирки, çил вěрме тапратрě пěрре ман витěр—сквоçнак, снађђăт. Хытах аптраса çитрěм. Илсе кайрăмăр вăн пěрре çак шеремете пуљнитсана. Ун ђухнех пурђђě пирěн пастовккă тăвас шут. Хвершăл Кěркурийе мěн каларěха ун ђухне? Астăватăри йулташсем?!

— Астăватпăр!

— Та, астăватпăр: «шăлусене тасатас пулат, ађам. Агту, çамрăк пуçăнах пěр шăлсăр тăрса йулăн. 40 пус шђоткă, 30 пус прошшок. Вăт сана тасатмалли хатěр. Кашни кун тасатмасан та, кашни пěр-ик кун хушшинђе тасатса тăма тăрăш»—тесе вěрентрě хвершăл. А ку: «тапак туртма та укçа çук та»—хирěçлерě хвершăла мăшкăласа. Вăт хаљ турт тапакна. Епěр кайатпăр. Сывă пул, çирěм çулхи шăлсăр старик! Ат-тва! ат-тва!—уттарђěç шăлсем Кěркурийе хăварса.

Пакăр-пакăр! йантăрарě пěрре Кěркури хырăмěнђе хыттăнах.

— Кра-у-ул!—çухăрса йађě хырăмра.

— Неушлě епě хěрарăм? Неушлě ман хырăмра ађа пур?—хыпашласа пăхрě хăй хырăмне Кěркури.

— Ан хыпашла. Ђар ђасрах шăлусене! Шăлусене пěтертěн те, мана та пěтерес тетни мěн? Шăлсемсěр епě ăçтан пурăнайатăп? Карау-у-у-ул!—çине тăрса çухăрма тытăнђě хырăмра такам.

— Карау-у-ул! Ан кайăр тархасшăн!—шăлсем хыççăн ђупма тăђĕ Кĕркури.

— Стой!—камантă пађĕ йулташсене асав шăл.

Шăлсем ђаранђĕç.

Кĕркури çитрĕ.

— Тархасшăн ан кайăр. Вăл ухмах пирки мана ан вĕлерĕр!—тархаслама тытăнђĕ пĕр сасă хырăмран—Кĕркури ăшĕнђен шăлсене.

— Айта, есĕ те тух. Пушанса йултăр. Вилтĕр Кĕркури!—калаçса илђĕ асав шалти сасăпа.

Пакăртатма тытăнђĕ Кĕркурин хырăмра. Кăна та пулин кăларас мар тесе Кĕркури çыртрĕ шăлĕсене. Анђах шăлсем çук çăварта.

— Карау-у-ул! Ђирлерĕм! Тухма та вăйăм çук! Карау-у-ул! тапкаланма, çухăрма тытăнђĕ Кĕркури хырăмĕнђе.

Çавăнтах тытăнђĕ Кĕркури хырăмĕ ӳссе хăпарма. Ӳсет, ӳсет, ӳсет. Пĕр урам тулђĕ Кĕркурин хырăмĕ ӳссе хăпарса. Урам çитмерĕ—йунашар килĕн хапхине уçрĕ—унта кĕме тытăнђĕ. Çаплах ӳсет. Йунашар килĕн тулђĕ килкартийĕ. Çуртсем ишĕрĕлме тытăнђĕç хырăмпа хирĕнсе.

Сывлайми пулђĕ Кĕркури. Халран кайрĕ. Утас —утма çук. Хырăм ђарат.

— Вăт сана наккасани. Епĕр кайрăмăр—хырăму та тытăнђĕ хирĕçме. Вăт ăçта илсе пырат пурăнма пĕлменни,—Кĕркурирен мăшкăласа кулаççĕ шăлĕсем.

Кĕркури ђĕнеймест нимĕн те. Хырăмĕ кăна ӳсст виçесĕр васкавлă. Акă кӳршĕ сарайĕсене çĕмĕрсе тухрĕ хыçал йенелле. Хыçалти пахђа витĕр тухса пытанђĕ. Çӳллĕшĕ, пĕлĕтелле ӳссе, хутшăнђĕ çăмăр пĕлĕђĕпе. Çăмăр пĕлĕтне ђарђĕ—йамаст ниçталла.

„Йăлтăр-йăлтăр“ çиçĕм çиçрĕ пĕлĕтре.

„Çатăр çатăр-çат!“ аçа çапрĕ Кĕркури хырăмне.

„Лашт!“ çурăлђĕ Кĕркури хырăмĕ. Çăкăр хыттисем. Ђăмăртанса ларнă çăкăр çемçисем. Ђăмтамасăрах çăтса ангарнă какай татăксем. Улма турамĕсем. Хăйар мĕнле çăтнă—çаплипех. Кĕпĕрленсе пыђĕç Кĕркури патне хырăмĕнђен тухса.

— Акă мĕнле сайа йаратăн есĕ пирс шăлусене пăхман пирки!—сырса илђĕç Кĕркурийе çавăнтах.

Лешкаш ађи-сар ађи
Сарай тавра кускалат.
Кускалин те кускалатăр
Хăй нушине хăй курат!

Ташласа уйăрăлса кайрĕç Кĕркурирен шăлсем.

Хырăм хăвăрттăн ÿссе хăпарма тытăнђĕ тепĕр хут.

— Ох, ђуто! —кăшкăрса вăранђĕ Кĕркури ăйхăран. Çирĕм çула çитсех çиђĕ шăл çуккине аса илђĕ ăйхă тĕлĕшпе. Ыратакан хырăмне хыпашласа пăхрĕ сылтăм аллипе.

— Ђăнахах та ђуто,—çирĕплетрĕ тĕлĕкне, шухăша кайса.

— Çирĕм çула çитсе çиђĕ шăлăм çук. Варпа антратăп кашни кун. Разве не чудо?—хăйĕнђен хăй ыйтрĕ тĕлĕнсе.

# ТУПМАЛЛИ

| | |
|---|---|
| | стр. |
| Республёкре пёрремёш | 3 |
| Илйин йулташпа Хёритун çинçен | 14 |
| Сăран савăтёнçе | 19 |
| Хосрашçутлă тсех | 27 |
| Рутникре | 29 |
| Пукçирлă прикатă | 34 |
| Çутăсăр çуртсем | 37 |
| Уçланкăри çуртсем | 40 |
| Çамрăк хирурк | 43 |
| Йут елемент | 47 |
| Ухмах Йăван | 51 |
| Шăлсен пастовкки, тата—хырăм пёлётпе çапăçни | 56 |

Редактор Чувашгива **С. Фомин.**
Технический редактор **А. Быков.**
Сдано в набор 29-IV-1933 г.
Подписано к печати 9-V-1933 г.
Чувашиздат № 63 Ст. формат б. 72х105, 4 печ. листа
33920 зн. в печ. лис. Тираж 4100 экз. Уп. Чуваллита № 1361.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашгиза. Заказ № 328.

Хакĕ 50 пус
Цена 50 коп.

Х — Ч

С. ШЪПЧЪК

# УДАРНИКЕ
# АПАЕ

ОЧЕРКЪ

ЧувашГИЗ
1933